ПЕТЕМ ТЕНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПЕРЛЕШЕР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

ВКП(б) Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хăçачĕ

1952 çул
Май
16
ЭРНЕКУН
№ 96 (8748)

Хакĕ 20 пус.
35-мĕш çул тухать.

Паянхи номерте:

Совет Союзĕ тăрăх (1 стр.).
МТС-сенчи, колхозсенчи хăватлă ялхуçалăх техникипе туллин усă курар! (1 стр.).
ПАРТИ ПУРНАÇĔ Н. Никитин.—Район юлса пынине хăвăртрах пĕтермелле (2 стр.).
М. Юрьев.—Хастарлă ĕçĕн ăнăçлăхĕ (2 стр.).
В. Таврин.—Финанс планне вăхăтра тултарассишĕн (2 стр.).
Н. Архипов.—Колхоз пурнăçĕн тĕп законне çирĕп пурнăçласа пырар (2 стр.).
МАЛТА ПЫРАКАНСЕН ОПЫЧЕПЕ ПАЛЛАШТАРАТПАР. Кантăр—пысăк тупăш паракан культура.
Канаш районĕнчи «Аниш» колхоз агротехникĕ И. Добросмыслов юлташ каласа пани (3 стр.).
КРИТИКАПА БИБЛИОГРАФИ. И. Никифоров.—Александр Артемьев калавĕсем пирки (3 стр.).
Ача-пăча литературине çулти пусăма хăпартасишĕн (3 стр.).
Халăх демократи çĕршывĕсенче (4 стр.).
Корейăри ĕçсем (4 стр.).
Парижри ĕççысниисем Алжирти, Тунисри тата Мароккăри ĕçсăмсиисемпе пĕр шухăшлипе палăртса митинг иртернĕ (4 стр.).
Тунисри лару-тăру (4 стр.).

Совет Союзĕ тăрăх

★ ★ ★

Азов каналне туса пĕтернĕ

ДОН ÇИНЧИ РОСТОВ, майăн 12-мĕшĕ. (ТАСС). СССР Министрĕсен Совечĕ Атăлпа Дон хушшинче канал тăвасси çинчен йышăннă постановлени Ростовпа Сталинград облаçĕсенчи çĕрсене шăварма, ытти каналсемпе пĕрлех, Азов каналне туса палăртнă. Ку канал 90 километр тăршшĕ пулмалла, тĕкĕ.

Халĕ ĕнтĕ Азов каналне туса пĕтернĕ. Канал тулли шыв тăрать.

Каналти шыпна ни малтан Веселовски районти колхозниксем усă курма тытăннă. Пĕр уйăх каялла, насус станцийĕнчи иккĕмĕш агрегата ĕçе янă хыççăн, канал тăрăх пыракан шыв Багаевски тата Аксайски районсене çитнĕ. Ку районсенчи колхозсемпе совхозсем халĕ тулă, курăк тата ытти культурăсем акнă уйăсене шăвараççĕ.

Майăн 11-мĕшĕнче каналти шыв Батайски района çитнĕ. Ленин ячĕпе тăракан колхоз тырпулсене шăварма тытăннă. Унтан шыв Молотов ячĕпе тăракан колхоз уй-хирĕ патне çитнĕ. Унта—канал вĕçĕ.

Азов каналне туса пĕтернĕ ятна канал вĕçĕнче (902-мĕш километрта) митинг пуçлă. Митинга строительсем, колхозниксем, партине совет органĕсен руководителĕсем пухăннă.

Азов каналне тăвакансем совет халăхĕн асăлă çулпуçне И. В. Сталин юлташа панă сăмаха чыслă пурнăçланă. Азов каналне туса пĕтерсе шыв тултирнă. Канал тăрăх пыракан шывпа 5-районти колхозсемпе совхозсем усă курассĕ, 35.000 гектар çĕр çинче тырпула шăварса ӳстереççĕ.



Владимир облаçĕ. «Автоприбор» заводри пĕтĕм коллектив стахановла ĕçлет, плана пĕрмаях иртнерсене тултарать. Завод паха продукци туса кăларать.

УКЕРЧЕК ÇИНЧЕ: мастер Н. Степанова (Кăмăлтăмри) стахановка Л. Хайнина пухăнă шитсене тĕрĕслет. Степанова юлташа Автомобильне трактор промышленность министерствин чи лайăх мастерĕ ятне панă.

В. БАЙДАЛОВ фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Дрисяты ятлă кӳлĕ çинче вырăс колхоз гидроэлектростанци лартаççĕ. Çак кӳрпĕлле колхозсем вырăс союзла республикăна Литва, Латви тата Белорус ССР-ĕсене кĕрсе çĕр. Колхозниксем çĕнĕ гидроэлектростанцине «Халăхсен туслăкĕ» тесе ят панă ялăшăнпа.

УКЕРЧЕК ÇИНЧЕ: техник Анатолий Бобровский Дрисяты кӳлĕ патĕнчи вырăн планне ÿкерет.

М. МИНКОВИЧ фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

★

Мао Цзе-дун произведенийĕсене пичетлесе кăлараççĕ

Мускаври издательство Мао Цзе-дунăн суйласа илнĕ произведенийĕсене вырăсла пичетлесе кăларма тытăннă. Суйласа илнĕ произведенисене тăвата кĕнеке пичетлесе кăлараççĕ. Çак кĕнекесенчĕ Пекинра Китай чĕлхипе пичетлесе кăларакан тăвată тома кĕртнĕ произведенисемех пулаççĕ.

Мао Цзе-дунăн суйласа илнĕ произведенийĕсен кĕнекисене вăл Китай революцийĕн тĕрлĕ тапхăрĕсенче çырнă статьясемпе тухса калана сăмахсем кĕреççĕ. Вĕсене пурне те автор сĕнĕрен пăхса тухнă.

Халĕ Мао Цзе-дунăн произведенийĕсен пĕрремĕш томĕ пичетлесе тухнă. Унта 1926—1937 çулсем хушшинче—гражданла революцилле вăрçăн пĕрремĕшне иккĕмĕш тапхăрĕсенче çырнă произведенисем кĕнĕ. Çав шутра. «Китай общественчи классем çинчен» ятлă статья, «Хунань провинцийĕнчи хресченсен хăхăмне тĕнчеçе пĕлни çинчен калакан докла», «Китайри революцилле вăрçăн стратеги вăйăтăвĕсем» ятлă, граждланла революцилле иккĕмĕш вăрçă опытне пĕтĕçтерсе çырнă произведени, догматизмпа эмпиризм майлă тăракансен субъективистла йăнăшсене хирĕç çырнă «Практика пирки» тесе ят панă, пирĕн çĕршывра нумайăшне пĕлекки статья тата ытти.

Икĕмĕшне виççĕмĕш томсенчĕ Япония хирĕç пынă вăрçă вăхăтĕнче çырнă статьясемпе тухса калана сăмахсем пуçлаççĕ. Тăвăтăмĕш тома граждланла революцилле виççĕмĕш вăрçă пынă тапхăрта тата Китай Халăх Республикине туса хунă хыççăн çырнă произведенисем кĕреççĕ.

Мао Цзе-дунăн произведенийĕсен çак кĕнекисенчи умстатьяна Китайри коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ Мао Цзе-дунăна асăннă произведенийĕсене пичетлесе кăларма ушăрăн комиси сунă. (ТАСС).

Коммунизм стройкисем валли

ЧИМКЕНТ (**Кăнтăр Казахстан облаçĕ**). майăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Чимкентри прессемпе автоматсем тăвакан заводра ĕçлекенсем пĕлĕн Цимлянски гидроузел валли 160 тонна таякан пресс тиесе янă. Ку заказа пăлăртăр сроканнах пĕр уйăх малтарах пурнăçланă.

Предприятин коллективĕ Атăлпа Дон хушшинчи каналра Кăнтăр Украина, каналĕн строительĕсем валли тĕрлĕ йышши 13 агрегат ярса панă.

Цимлянски гидростанцинче

НОВО-СОЛЕНОВСКИ, майăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕвĕр монтажникисем Цимлянски гидростанцин пĕрремĕш агрегатне вырнаттарса лартаççĕ пĕтерĕç.

УКЕРЧЕК ÇИНЧЕ: мастер Н. Степанова (Кăмăлтăмри) стахановка Л. Хайнина пухăнă шитсене тĕрĕслет. Степанова юлташа Автомобильне трактор промышленность министерствин чи лайăх мастерĕ ятне панă.

В. БАЙДАЛОВ фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

★

Партине илес тата çамрăк коммунистсене воспитани парас ĕçе куллен ертсе пымалла

Коммунистсен партийĕ—совет халăхĕн авангарчĕ, пĕрлĕхлĕ те çирĕп организаци. Вăл хăйĕн речĕ тачă пĕтĕçсе тăнине, ирĕке тата ĕçĕ пĕрлĕхлĕ пулнине вăйлă, хăйĕн пĕтĕм ĕçне марксистла-ленинла теори тăрăх туса пынине вăйлă. Коммунистсен партийĕ рабочи класпа, ĕççысниисен миллионлă массине уйрăлми сыхăнса тăрать. Пирĕн ĕççысниисем коммунистсен партине хăйсен партийĕ, сывăх та тăван парти тесе йышăнаççĕ, ăна пысăклатса çирĕплетессишĕн вĕсем чĕреран интереслеççĕ, партие вĕсем ирĕклĕнех хăйсен кун-çулне цанса параççĕ.

Рабочи класăн, хресченсен тата совет интеллигенцийĕн чи лайăх çыннисем хăйсен кун-çулне большевиксен партийĕпе сыхăнтăрма тăрăшни совет, халăхĕ Ленин—Сталин партийĕ тавра тачă пĕтĕçсе тăнине, пирĕн халăх советлă обществаллă строя вĕçĕ-хĕрринçĕн парăнмасăр кăтартса парать. Халăхăн вăхăтра, пирĕн çĕршыв коммунизм строительствин аслă задачисене пурнăçласа пынă вăхăтра, мала пыракан çынсем большевиксен партине кĕрсе, коммунизм çĕнтерĕшĕпе çĕнтерĕшлĕ партине ертсе çитессишĕн ответлăхĕ те ÿсет: вĕсен парти ретне чи лайăх, мала пыракан çынсене сăлтавласа илмелле, куçпа пĕрлех сак питĕ кирлĕ ĕçе хăй юхупне ярма пуçласа.

Партин Центральнăй Комитечĕ партине илес ĕç çине питĕ тимлĕ пăхать, парти составне лайăхлатассишĕн тата коммунистсен партийĕн членĕн ятне сӳле çĕкленессишĕн ялавăн тăрăшать. «Пирĕн задача,—тенĕ В. И. Ленин,—пирĕн партин çирĕплĕхне, чăтăмлăхне, тасалăхне упрасси. Эпир парти членĕн ятне тата пĕтĕрмĕше сӳлеретпĕр, сӳлерет тата сӳлерет çĕкленессишĕн тăрăшма тивĕçĕ...» Аслă учителĕмĕр сăмахĕпене пирĕн парти çирĕп пурнăçласа пырать, мĕншĕн тесен коммунистсен партийĕ хăйĕн членĕсен хисепĕпе кăна мар, чи малтан, вĕсен пахалăхĕпе, вĕсен çирĕп пулнипе, вĕсем политикăллă ăнланăлăхĕпе пысăк пулнипе, вĕсем рабочи класпа ĕççысниисем ĕçне чĕререн парăннипе вăйлă.

Республикăри чылай районсенче хулаçенчи партурганизацисем, ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн кăтартăвĕсене пурнăçласа, юлашки вăхăтра партине илес тата çамрăк коммунистсене воспитани парас ĕçе ертсе пырассине чылай лайăхлатрĕç, партине кĕреçенсем умне пысăкрах требованисем кăларса тăратма пуçларĕç, коммунистсен политикăллă пĕлĕхне ӳстерес тĕлĕшне итлараç тăрăшаççĕ. Сапах та партине илес тата çамрăк коммунистсене воспитани парас ĕçре пысăк ситменлĕхсем пур-ха.

Уйрăм парторганизацисем партине илекенсен составне тăтăшах лайăхлатса пыма кирлĕ пек тăрăшмаççĕ, ВКП(б) Уставне пăхăнмасăр, партине пĕрерĕн суйласа илмелли принципа пăсаççĕ. Парти ретне пахалăх тĕлĕшпĕчен лайăхлатас ĕçе çинен кӳрсе, хăшпĕр парторганизацисем партине кĕме мĕтаканнисене пурне те пекех илеççĕ, вĕсем парти членĕн пысăк ятне илме тивĕçлине тивĕçлĕ марринне тĕплĕн сăнаса пĕлмеççĕ.

Партине илес тата çамрăк коммунистсене воспитани парас ĕçре ВКП(б) Шăхасан районĕ пысăк ситменлĕхсем тăвать. Вăл колхозри парторганизацисене çирĕплетессишĕн сахал тăрăшать, кĕрешӳре тĕрĕслеççĕ, обществаллă тата политикăллă ĕçре хăйсене палăртнă колхозниксене партине суйласа илес тĕлĕшне сителлекĕр, ĕçлет. Партине илессине куллен ертсе пыман пиркисем ĕнтĕ колхозсенчи пуçламăш парторганизацисем ирăлăшĕ иртнĕ çулта пĕр сыннă та партине илмен. Партине кăçалхи вĕçĕ уйăхра вăтăмсем хушшинче колхозниксене колбайнерсем тата трактористсем пĕр сын та çук. Çав вăхăтрах районти партине кĕме хатĕрленмен е иртнĕ çулсенче партирен кăларнă тата çупа çупма айăпланнă сыннесем партине илнĕ пуçнă.

Пирĕн парти ăланах ӳсе пынă. Вăл партире пулма тивĕç, вăл Ленин—Сталин партийĕн ĕçĕшĕн кĕрешес хăйне палăртнăн, ун валли пирĕн партин алăкĕ ăланах ӳçă. Анчах пирĕн парти хăйĕн ретне пысăк çын тӳрлеме пăхса ӳстересе пыма пуçăнăç та тăрăшмăн, тăрăшмасть те. Кирек хăй тăвăçра та пирĕн парти хăйĕн ретне хăвантăм е партин кĕрĕшĕрĕн пултарулăхне вăйсăрлатма пултаракан сывлăш парти ретне кĕрсе канăçран хытă сыхланнă. Сăвăнса та ĕнтĕ партуне ăнăçлă пăхса тухмалла, вăсенпе ăнăçлă пулмалла мар. ВКП(б) Уставĕ ҫулçисене пурне те çирĕп пурнăçласа, партине илме заявлени панă çынна, вăл коммунист ятне сӳлте тытма тата коммунист çĕнĕçене чыслă пурнăçлама пултарнине пĕлсе çитсен кăна цартă ретне илмелле.

Анчах уйрăм парторганизацисем партине илме панă заявленисене пăхса тухнисĕр пуçне урăх нимех те тумаççĕ. Вĕсем партине илме мĕтакансен пурнăçне, вĕсен политикăллă тата ĕçлĕхлĕ пахалăхне сăнаса пĕлме тăрăшмаççĕ. Предприятисенчи нумай парторганизацисем, сăмахран, Шупашкарта Канаш хулисенчи хăшпĕр предприятисенчи парторганизацисем, обществаллă тата политикăллă ĕçре хăйсене палăртнă рабочисене, инженерсемне техниксене партине сӳлласа илес тĕлĕшне кирлĕ пек тăрăшмаççĕ. Уламăр районĕнчи парторганизацин речĕ тĕ колхозниксем, трактористсемне комбайнерсем шучĕне çителĕкĕр ӳсет.

Парти кандидатĕсене воспитани парасси те çителĕкĕр пулса пырать-ха. Нумай пуçламăш парторганизацисем çамрăк коммунистсемпе тăтăшах ĕçлемеççĕ, вĕсен политикăллă активлăхне куллен ӳстересе пымаççĕ. Пирĕн нумăй пуçламăш парторганизацисенче парти ĕçне хутшăнман, хăйсен ирĕлăллă-политикăллă пĕлĕхне ӳстерес тесе çине тăрах тăрăшман кандидатсем те сахал мар. Нумай кандидатсен парти кандидатĕнче тăмалли стаж тахçанах иртсе кайнă. Ун пек кандидатсем уйрăмах Шăмăрпа, Ишлей тата Вăрмар районĕсенче парторганизацисенче чылай.

ВКП(б) райкомĕсемпе хула комитечĕсен партине илес тата çамрăк коммунистсене воспитани парас ĕçе вăйлатас пулать. Нимрен ытларах партине илекенсен составне лайăхлатассин çине тимлĕ цăхни кирлĕ. ВКП(б) ретне политика тĕлĕшĕнчен тĕрĕслениĕ, обществаллă политикăллă ĕçре хăйсене пур енчен те пăлăртнă, активлă тата ăнлануллă рабочисене, колхозниксене тата МТС механизаторĕсене пĕрерĕн суйласа илмелли ленинла-сталинла большевикла принципа çирĕп пурнăçласа пымалла.

Парти организацийĕсен хăйсен тавра партире тăман активпа пĕтĕçтерессишĕн, ăна политикăллă воспитани парассишĕн куллен тăрăшмалла. Партире тăман активпа парторганизацисен çуд пухăнăсене чĕнни, активистсене политикăллă ĕçе, парти вĕренĕвне ытларах вăйăтарни кирлĕ.

Çамрăк коммунистсене воспитани парассин çине питĕ тимлĕн пăхас пулать. Кандидатра тăнă вăхăтра вĕсем парти программине Уставне тарăнрах ăнланса илме пултарччăр, хăйсен политикăлă тата ĕçлĕхлĕ пахалăхне кăтартчăр. Партин çамрăк членĕсемпе кандидачĕсене партиллĕ тата обществаллă ĕçе активлă хутшăнтарас пулать. Кашни коммунистăн партипоручени пултăр, вăл парти пухăвĕсене сӳресе, унта хăйĕн активлăхне ытларах палăртăр, партине государство дисциплинине çирĕп пăхăнса ĕçлетĕр, хăйĕн политикăллă-политикăллă пĕлĕвне тата производствăллă квалификацине тăтăшах ӳстерес пытăр.

Партине илес тата çамрăк коммунистсене воспитани парас ыйтусене парти пухăвĕсенче, райкомсемпе хула комитечĕсен бюровĕсемпе пленумĕсенче, партпрганизаци секретарĕсен семинарĕсенче тăтăшах сӳтсе явас пулать. Партине илмене ыйтакан юлташсен документĕсене кирлĕ пек пĕрхелес, парти членĕн билетне канлăлат карточки парас тĕлĕшне ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ çирĕплетнĕ. Пĕрекесене пурнăçлас ĕçсĕм çине те тимлĕ пăхмалла.

ВКП(б) ретне илес ĕçе куллен ертсе пырса, парти организацийĕсен парти членĕн ятне сӳлте тытса пыраççишĕн тăрăшмалла. Парти членĕсен ăнланăлăхне хăпартса пырса, парти ретне тĕрĕслеллĕ тата коммунизм ĕçне пăрăнма юлташсене пĕрерĕн суйласа илес пĕрекене çеç илзе, парти составне тăтăшах лайăхлатса пымалла, «... пирĕн питех те сыхланудзă пулмалла тата пирĕн парти вăл крепость пулнине, унăн алăкĕсем тĕрĕслленнĕ сынсемпĕн çеç ӳçăлмаллине манмалла мар» (И. Сталин).

Партине илесси тата çамрăк коммунистсене воспитани парасси райкомсемпе хула комитечĕсен, вуçламăш парторганизацисен ĕçĕнче пысăк вырăн йышăнса тăрать. Коммунизм çĕнтерĕшĕпе, тĕрĕрен парăнса кĕрешекен çынсене партине илес тата çамрăк коммунистсене большевикла воспитанни парас ĕçе лайăхлатнă парторганизацисене партилĕ-организацилĕ, партилĕ-политикăллă ĕçсене вăйлатма, республика хуçалăхĕпе культура строительствипи пысăк задачăсене чылай пурнăçлама пулăшать.

Кӳçа сӳрекен Хĕрлĕ ялав илнĕ

УЛАТАР. Сигнализацине сыхăну хистăвăнни колхозниксĕн кĕрменни кварталта паха тĕслĕçсем кăтартăнăн. Хусен чугун çул управленийĕн кӳçса сӳрекен Хĕрлĕ ялавне илчĕ. Дистанцире пысăк пахалăхпа ĕçлекен çынсăмсем чылай. Уйрăмах И. Сорокин юлташ ертсе пыракан смена лайăх ĕçленипе палăртас пулать.

Халĕ хистанни коллективĕ пикĕмĕш кварталта плана йăнăçă тултарассишĕн, абонентсен ыйтăвĕсене лайăх тивĕçтересшĕн ăмăртса ĕçлет.

Петр Моисеенко çуралнăранпа 100 çул çитнĕ

ОРЕХОВО-ЗУЕВО, майăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Хулари ĕççысниисем Орехово-Зуево хулинчи Морозов фабрикинче 1885 çулта пулнă историре палла статчăна организацилеме Петр Моисеенко çуралнăранпа 100 çул тултарнине палăртаççĕ. Малта пыракан ткач-революционерăн ячĕ—большевиксен партийĕн историне кĕрсе юлнă палла-ят.

Петр Моисеенко тăнсе Орехово-Зуевăра пытарнă. Паян кунта хулари ĕççысниисем пысăк митинг пуçлă. Петр Моисеенкăн пурнăçĕпе революцилле ĕçĕсем çинчен партин хула комитечĕн секретарĕ А. К. Савельева, ун чухнехи революцилле ĕçсене хутшăнăнă Ф. П. Заколотнев тата ытти çын та каласа кăтартнă.

Петр Моисеенкăна хисеплесе асăннă çĕре Морозов фабрикинчи статчăна хуттăнăнă 90 çулхи П. Е. Аббакумов та пынă.

МТС-сенчи, колхозсенчи хăватлă ялхуçалăх техникипе туллин усă курар!

★ ★ ★ ★ ★

ТЕШТЫРĂСЕМ АКМАЛЛИ ПЛАНА ТУЛТАРНĂ

КУВАКИНО. Районти колхозсем ир авакан тĕштырăсем акмалли плана, кĕрне тумалли культурăсене шутламасăр, майăн 13-мĕшĕнче 102 процент, тымарçимĕç акмалли плана—100 процент, пуçăмай çул ӳсĕкен курăксем акмалли плана 124 процент тултарнă.

ПАРАЧКАВ. Район ир авакан тĕштырăсем акмалли плана майăн 14-мĕшĕнче тултарнă, планран иртерсе 500 гектар тулă акса хăварнă. Ака-суха ĕçĕ малалла пырать.

МЕХАНИЗАТОРСЕН АМĂРТАВĔ

Чăваш АССР Ялхуçалăх министерстви пĕтерхĕ тăрăх, сурăн уй-хир ĕçĕсем тăвас тĕлĕшпе. майăн 10-мĕшĕ тĕлне çак механизаторсем уйрăмах лайăх тĕслĕксем кăтартнă.

Первомайски МТС-ĕ тăрăх

Цветков юлтан ертсе пыракан трактор бригали кашни 15 лаша вăйлĕ трактора 68 гектар сухалăнă чухлĕ ĕç тунă.

Селиверстов юлтан ертсе пыракан трактор бригали кашни 15 лаша вăйлĕ трактора 59 гектар сухалăнă чухлĕ ĕç тунă.

Çак бригадăсенчи Чамданов юлташ—116 гектар, Пырини юлташ—102 гектар, Бородин юлташ—93 гектар, Волков юлташ—80 гектар сухалăнă чухлĕ ĕç тунă.

ТРАКТОР БРИГАДИ ЯПАХ ЕÇЛЕТ

ЭЛĔК. Сурăки вăйлă тырпушăн кĕрешнĕ ĕçре чи ответла тăнăçăр. Анчах та МТС-ри 10-мĕш трактор бригали (бригадирĕ Миронов юлташ) тухăçлă тырпул туса илессишĕн сителлекĕр кĕрешет.

Бригадăра тăвата трактор. Вĕсемпе пĕр сменăра 24 гектар сухалăнала пулсан, халĕ 10 гектартан ытла сухалаймаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсене начар ĕсанă.

Трактор бригадин бригадирĕ трактористсем ĕçне кирлĕ пек пĕрлелемест, хăйĕн ĕçне сăнатăн кăна тăвать. МТС администрацийĕ те 10-мĕш бригадăри ситменлĕхсене пĕтерме тăрăшмасть. П. КАЗАНОВ.

Тракторсемпе сителĕкĕр усă курараççĕ

Вăрмар районĕ сурăн ака-суха ĕçĕсенче юлса пырать. Çака вăл МТС начар ĕçленинчен чылай килет, мĕншĕн тесен районта сурăки ĕçĕсем виçĕ пайран икĕ пайне тракторсемпе тумалла.

Тракторсене тĕплĕн ĕсаман пирки вĕсенчен чылаййăмĕ ĕçлемеççĕр паракаçĕ. Ака, И. Чернов юлтан ертсе пыракан бригадăри «ДТ-54» маркăлă икĕ трактор моторĕсем ĕсавăрпине «Большевик» тата «Хĕрлĕ Кĕтне» колхозсенче пĕр ярне хушши ĕçлемеççĕр паракаçĕ. П. Поспелов юлтан бригали те Калинин ячĕпе тăракан колхоза çитсе ларнăранах СТЗ трактурăн коленчатăй валне ĕсатъ, трактор тăсан ĕçлеме пуçласси палăл мар. П. Макаровпа Г. Русанов юлташсем ертсе пыракан бригадăсенчи тракторсем те тĕрлĕрен кăлтăксене туса хĕрĕ ĕç вăхăтĕнчех чарăна-чарăна паракаçĕ.

МТС директорĕпе (директорĕ П. Горлеев юлташ) трактористсене тухăçлă ĕçлеттерме тăрăшмасть. Ĕçлеса ситермен трактористсĕн, кусран сухалчăр тесе, колхозсене кăларса янă. Мастерскойĕнче туса ситермен ĕçсене колхозсенче те вĕçлеме пулнă, анчах бригадăсене пулăшма директори кусса сӳреван мастерской организацилемен. Кусса сӳрекен мастерской ушкăнĕнче механиксем трактор бригадисенче пулмаççĕ, МТС-ăн главнăй механикĕ М. Верхунов юлтан сурăки пуçланнăранпа пĕр-бригадăна та çитсе курман.

Хăмпĕр трактористсем, пулăшу кĕтсе, хăйсем вăй ситерекен ĕçсенех тăвăçăр, трактурсене ĕçлеттерместĕр лартаççĕ. «Правда» колхозра М. Максимов тракторист, сеялкăна акна вырнаторма пĕлместĕн тесе, трактора икĕ кун хушши ĕçлеттермен.

Бригадăсенче тракторсене икĕ сменăпа, уйрăмах кăсăнпе ĕçлеттересĕр лартăç тĕслĕксем пур.

МТС-ăн участокри агрономĕсемпе колхоз председателĕсем агротехника правилисене пăсницне кăмăнсе лараççĕ. Г. Русанов юлташ ертсе пыракан бригадăри трактористсем Чапаев ячĕпе тăракан колхозри кĕрши сĕрме тăвăн пуçлинче ăмăх тата шăйăк хăварса сухалаççĕ. «Родина» артельти Лукин тракторист предплужникĕсĕр плугпа сухалать. Молотов ячĕпе тăракан, «Маяк», «Авангард» колхозсенче те трактористсем сĕрме ăмăх сухалаca «горючи перекетласçĕ».

Колхоз руководителĕсенчен те МТС-па тунă договора пурнăçлама тăрăшманнисем пур. «Родина» колхоз председателĕ Васильев юлташ горючи вăхăтра кӳрсе килессине организацилемен, сивăнна ĕшенĕ трактурна икĕ кун хушши сураки ĕçĕсене те тăвайăнах. Колхозра трактористсем валли апат пĕçерме çын уйăрман.

Чылай колхозсенче трактор бригадисенчи будкăсене юсаса пама тăрăшмаççĕ. Будка сукки трактористсене икĕ сменăна ĕçлеме чăрмантарать.

МТС директорĕпе пуçламăш партурганизаци трактористсем хушшинче социализмла ăнăçăва ячĕпе çеç пĕрлелĕнĕ. Вĕсен уй-хир ĕçĕсенчи бригадисен паха обязательстăйсем илнипех ăнăçлă пулăшаççĕ, мала пыракансен опытне сарассине организацилемен. Сураки пуçланнăранпа стена хасачĕ пĕр енне çеç вăлăрнă. Хисеп хăми çук. Чылай бригадăсенче агитаторсем хур çинче çеç шутланса тăраççĕ.

Трактористсен ăмăртăнне кирлĕ пек пĕрлелеменнине МТС куллен графика пурнăçлайăмасть, вăл колхозсем умĕнче пысăк парăма кĕрет.

ВКП(б) Чăваш обкомĕ республикăри МТС-сен ĕçĕнче пысăк ситменлĕхсем пуррине кăтартса панă. Çак кăтартурăн Вăрмар МТС руководителĕсен тивĕçлă выводсем тумалла.

И. ВОЛКОВ,
(Хăмăр инж.).

ПЫСĂК ТУХĂÇЛĂ КЛЕВЕР ВАРРИШЕН

ПЕРВОМАЙСКИ. Пĕрлешсе пысăкланнă «Путь коммунизма» колхоз (председателĕ А. Манзыров юлташ) иртнĕ сул вăрлăх участокĕ çинче пысăк тухăçлă клевер вăрри туса илнĕ. 35 гектартан вăтам шутпа кашни гектар пуçне 266 килограмм клевер вăрри пухса кĕртнĕ. Колхоз хăй валли сителĕкĕпе вăрлăх хатĕрĕпе, государствăна клевер вăрри парса 130 тонн тенкĕ тупăш илчĕ.

«Путь коммунизма» колхозра султа-йăкра пĕрре сулса клевер хĕрлĕ клевер акса тăваççĕ. Клевер вăрринче кĕркунне вăрăм пуçлекке акса хăварассĕр, сурăнне сӳртринче хунăш ларассĕр. Иртнĕ сул ăрăм пуçлекке 92 гектар клевер акса хăварнă. Кăçал сурăкунне клевер валчине сĕрелĕрĕç, апат пачĕç.

Колхозра кăçал пĕр кун хушшинче 92 гектар çине сенăлкăна клевер акса хăварнă-çĕ.

Кăçал колхозниксем вăрлăх участокĕ çинчен вăтам шутпа кашни гектартан 300-шер килограмм клевер вăрри туса илеççишĕн кĕрешеççĕ.

А. ТУКМАКОВ.

САДРИ ЕÇСЕМ

ИШЛЕЙ. «Знамя труда» колхоз садран пысăк тупăш илет. Сада сулсерен пысăклатса пырăççĕ. Унта ĕçлеме 31 çынтан бригада туни, ăна опытлă колхозник М. Бояшков юлтан ертсе пырать.

Садра хĕрлĕлĕ ĕç пырать. Пысăçсем тавра тислĕк тăкрĕç тата хăрăк тунатсене тасатрĕç.

Умăнсенче хушшине сухалас, культивацин тăвас ĕç пысланчĕ. Парникпе теплицăсене пахча çимĕçсем ӳсеççĕ.

Кăçал сада 18 пин йывăç, 3 гектар çине сырма йăнăçлисем лартмалла. Сур гектар çинче çамрăк улмуçсене питомникĕ пулать. Лартмалли йăнăçсене сителлекĕ илсе килнĕ.

Х. ЛИСИН.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Район юлса пынине хăвăртрах пĕтермелле

«ВКП(б) Шăмăршă райкомĕн черетлĕ пленумĕ пулса иртрĕ. Пленум Шăмăршă райкомĕн ĕçĕсем пирки ВКП(б) обкомĕ йышăннă решенисем çинчен обком секретарĕ С. Ислюков юлташ тунă доклада сÿтсе яврĕ.

ВКП(б) Шăмăршă райкомĕ районти колхозсемпе предприятисене государство паракан пысăк пулăшупа кирлĕ пек усă курмасть. Çавна пула ĕнтĕ район кал юлса пырать, государство умĕнчи чылай обязательствăсене вăхăтра пурнăçламасть. Районти колхозсем тырпул акма государство паракан плана та тултармаççĕ. Çурхи тулă, пăрçа йышши культурăсем, çĕрулми, нумай çул ÿсекен курăксем акакан çĕр лаптăкĕ чакса пырать. Çурхи тырăсем акмалли план кăçал та тулса пымасть.

Райкомпа райсовет исполкомĕ ялхуçалăхне кивĕ меслетсемпе ертсе пыраççĕ, хăйсен йăнăшĕсене асăрхамаççĕ, çĕрĕç культурине лайăхлатассишĕн тата тырпул тухăçлăхне çулсерен ÿстерессишĕн кирлĕ пек кĕрешмеççĕ. Пусă çаврăнăшĕсене йĕркелес ĕçри пысăк çитменлĕхсене пĕтерме тăрăшни çук. Районти колхозсенчен чылайăшĕнче нумай çул ÿсекен курăксем пачах акмаççĕ: Çĕртме пуссисенчи ĕçсене вăхăтра тата кирлĕ пек туманни тырпул тухăçлăхне ÿстерес ĕçре пысăк сиен кÿрет. Тăпран сухаламалли, сийне тарăнлатма панă заданине районĕпе çуррине те пурнăçламан. Хăшпĕр колхозсенче тырра алăпа акаççĕ.

ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕ колхозсенче ялхуçалăх артелĕн Уставне пăснине хирĕç начар кĕрешеççĕ. «Мекш», Мичурин ячĕпе тăракан, «Искра», Жданов ячĕпе тăракан колхозсенчи ертсе пыракан работниксем ялхуçалăх артелĕн Уставне пăсса колхоза ертсе пымалли демократиллĕ никĕсе пурнăçламаççĕ.

Пленум уйрăмах выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри пысăк çитменлĕхсене палăртрĕ. Парти райкомĕ çак ĕçе тивĕçлипе хакламасть. Обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли виçĕ çуллăх плана сурăхсем енĕпе кăна тултарнă. Чылай колхозсенче выльăхсем валли апат хатĕрлемелли плана çулсеренех тултараймаççĕ, фермăсенчи йывăр ĕçсене механизацилемеççĕ.

ВКП(б) райкомĕ парторганизацисен вăйне колхозсенче ĕç дисциплинине çирĕплетме кирлĕ таран мобилизацилемест. Хăшпĕр колхозсенче колхозниксенчен чылайăшĕ артель производствине çителĕксĕр хутшăнать. Иртнĕ çулта мĕнпур колхозниксенчен 20 проценчĕ ĕçкунĕсен минимумне тултарман.

Чылай колхозсенче хушма хуçалăха аталантарма тăрăшмаççĕ, хурт-хăмăртан, пахча çимĕçсемпе тымарçимĕçсенчен, вăрманти производствăран ытла та сахал тупăш илеççĕ.

Пленум районти колхозсем ялхуçалăх ĕçĕсенче кая юлса пыни ВКП(б) райкомĕ партиллĕ-организациллĕ тата политикăллă ĕçсене çиелтен, витĕмсĕр туса пынинчен килнине палăртрĕ. Парти райкомĕ ялхуçалăхне малалла аталантармалли ыйтусене вăхăтра тапратмасть, кая юлса пыракан колхозсене организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен çирĕплетме вăхăтра пулăшмасть. Иртнĕ çулта ВКП(б) райкомĕн бюровĕ хăшпĕр колхозсен ĕçне тĕпчесе вĕреннĕ, вĕсене организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен тĕреклетмелли майсене кăтартса решени те йышăннă. Анчах, организациллĕ тата практикăллă ĕçсемпе çыхăнтарманнипе пула, çав решенисем пурнăçа кĕмесĕр юлнă.

ВКП(б) райкомĕ пуçламăш парторганизацисене çителĕксĕр ертсе пырать, вĕсен кĕрешÿри пултарулăхне ĕçри ответлăхне тата пусарулăхне ÿстерме тăрăшмасть. Райком работникĕсем парторганизацисен ĕçне тĕплĕ пĕлсе тăмаççĕ, вĕсен ĕçĕсене çиелтен кăна тĕрĕслеççĕ. Çавна пула райком йышăннă решенисенче парторганизацисен ĕçĕнчи çитменлĕхсен сăлтавĕсем палăрмасăр юлаççĕ.

Райком критикăпа самокритика меслечĕсемпе сахал усă курать. Партипе правительство кăтартăвĕсем тата райком йышăннă решенисем мĕнле пурнăçланса пынине кирлĕ пек тĕрĕслесе тăманни ВКП(б) райкомĕн ĕçĕнче пысăк çитменлĕх пулса тăрать.

Кадрсем суйласа илсе, вĕсене ĕçе вырнаçтарас тата воспитани парас тĕлĕшпе парти райкомĕ çителĕксĕр ĕçлет. Ертсе пыракан кадрсем час-часах улшăнса тăраççĕ. Парти райкомĕ уйрăмах комсомол тата профсоюз организацийĕсен ĕçĕсене кирлĕ пек ертсе пымасть.

Парти членĕсемпе кандидачĕсене марксистла-ленинла воспитани парас ĕçре тата та пысăк çитменлĕхсем пур. Районти работниксенчен чылайăшĕ политикăллă вĕренĕве хакламасть. Хăшпĕр политшкулсемпе кружоксенче занятисем вăхăтра пулса пымаççĕ, вĕренÿ программине тултармаççĕ. ВКП(б) райкомĕ пропагандистсен ĕçне куллен тĕрĕслесе тăмасть, пропагандистсен семинарĕсене сайра хутра çеç иртерет: пропагандистсенчен чылайăшĕ семинарсене çÿремест.

ВКП(б) райкомĕ районти ĕçсыннисем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе лайăхлатассишĕн çителĕклĕ кĕрешмест. Чылай парторганизацисем сумĕнчи агитколлективсем начар ĕçлеççĕ. Пуçламăш парторганизацисенче агитаторсен семинарĕсене сайра хутра иртереççĕ, парти райкомĕ агитколлективсен руководителĕсене хутран-ситрен кăна пухать. Колхозсенче стена хаçачĕсемпе боевой листоксем кăларас ĕçе начар йĕркеленĕ. Культурăпа çутĕç учрежденийĕсем хăйсен ĕçĕсене япăхтарса янă.

Парти райкомĕн бюровĕ райсовет исполкомĕпе ял Совечĕсен ĕçĕсене лайăхлатма тивĕçлĕ мерăсем йышăнмасть, вĕсен вăйĕсене район умĕнче тăракан хуçалăхла-политикăллă задачăсене пурнăçлама кирлĕ пек мобилизацилемест.

ВКП(б) райкомĕн бюровĕ тата райком секретарĕ И. Дубов юлташ района ертсе пырас ĕçри çитменлĕхсене критикăллă хак памаççĕ, районти парторганизацире критикăпа самокритикăна вăйлатма тăрăшмаççĕ.

Районти чылай предприятисем продукци кăлармалли плана хисеп енĕпе тултараççĕ, анчах ассортимент тăрăх панă заданине пурнăçламаççĕ.

МТС-ри ответлă работниксем,—терĕ пленумра Молотов ячĕпе тăракан колхозри партбюро секретарĕ Бочкарев юлташ,—çуракине лайăх хатĕрленсе çитни çинчен сахал мар шавларĕç. Халĕ вара, çурхи ĕçсене тытăнсан, чылай çĕрте вĕсен сăмахĕпе ĕçĕ сыхăнса пыманнине куратпăр.

Пленум ВКП(б) обкомĕ Шăмăршă райкомĕн ĕçĕсем пирки йышăннă решенине ырларĕ, [illegible] культура строительствине вăйлатма, партиллĕ-организациллĕ тата партиллĕ-политикăллă ĕçсене лайăхлатма конкретлă решенисем йышăнчĕ.

Н. НИКИТИН.

Финанс планне вăхăтра тултарассишĕн

Чăваш АССР Верховнăй Совет сессийĕ пирĕн республикăн 1952 çулхи бюджетне расходсем енĕпе 342 миллион та 119 пин тенкĕ çирĕплетрĕ. Кăçал халăх хуçалăхĕ валли 27 миллион та 348 пин тенкĕ, социально-культурăллă ĕçсем валли 277 миллион та 169 пин тенкĕ расходламалла.

Çак укçа-тенкĕне туллин усă курас тесен, вырăнти Советсен, предприятисен, хуçалăхпа суту-илÿ организацийĕсен руководителĕсен производствăпа финанс планĕсене тултарас, государство умĕнчи обязательствăсене пурнăçлас ĕç çине тимлĕн пăхни кирлĕ.

1952 çулхи Чăваш АССР-ĕн бюджетне пĕрремĕш кварталта тупăшсем енĕпе 23,1 процент, расходсем енĕпе 21,7 процент тултарнă. Ку тĕлĕшпе уйрăмах топливо промышленность управленийĕ начар ĕçленĕ. Вăл производство программине пурнăçламан. Апат-çимĕç, вырăнти, çăмăл промышленноçсем те пĕрремĕш квартал планне тултарман. Стройматериалсем тăвакан промышленность продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетес тĕлĕшпе плана тултарман. Çавна пула та ĕнтĕ бюджет умĕнчи обязательствăсене те пурнăçламан.

Суту-илÿ организацийĕсем те çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Сăмахран, Чебторг тавар çаврăнăш планне 4 процент тултарман. Автотранспорт управленийĕ автомашинăсемпе туллин усă курман, накоплени планне 50 процент кăна тултарнă.

Республикăри чылай районсем кăçалхи иккĕмĕш кварталта халăхран укçа-тенкĕ пухмалли плана тултарас тĕлĕшпе лайăх ĕçлерĕç. Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ кварталти плана ăнăçлă тултарнăшăн Муркаш районĕнчи финанс пайне куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялав тата пĕрремĕш преми памалла тунă. Ку район укçа-тенкĕ пухмалли плана 117,8 процент тултарнă. Чурачăк районĕнчи финанс пайĕ иккĕмĕш преми, Шупашкар хулинчи финанс пайĕ виççĕмĕш преми илме тивĕçлĕ пулнă. Çавăн пекех Улатăр, Ишлей, Комсомольски, Красноармейски, Сĕнтĕрвăрри, Çĕрпÿ, Чкаловски, Тăвай районĕсем те финанс планне иртерсе тултарнă.

Анчах укçа-тенкĕ пухмалли плана тултарасси пур районсенче те ăнăçлă пулса пырать тесе калама çук-ха. Хĕрлĕ Чутай, Куславкка, Йĕпреç, Октябрьски, Первомайски, Шăмăршă, Çĕмĕрле районĕсем ку тĕлĕшпе ытла та начар ĕçлеççĕ. Асăннă районсенче укçа-тенкĕ тÿлевĕсем тăрăх парăмсем чылай.

Укçа-тенкĕ пухмалли плана вăхăтра тата пысăк пахалăхпа тултарни район, хула, поселок тата ял Совет бюджечĕсене тултарас çĕрте пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç пулса тăрать. Анчах та хăшпĕр районсенче çак ĕç çине тимсĕр пăхаççĕ. Хĕрлĕ Чутай районĕ пĕрремĕш кварталта бюджета тупăшсем енĕпе 20,8 процент, расходсем енĕпе 21,9 процент тултарнă. Кунта ял бюджечĕсене тултарассине тивĕçлипе хакламаççĕ. Çавна пула ĕнтĕ пĕрремĕш кварталта ял бюджечĕсене 14 процент кăна тултарнă.

Куславкка районĕ те укçа-тенкĕ пухмалли плана кварталтан квартала тултармасăр пырать. Ял бюджечĕсенчен ĕç укçи илекен служащисене укçа вăхăтра памаççĕ.

Республика бюджетĕнче, уйрăмах район, поселок тата ял бюджечĕсенче заем сарнипе пухăнакан укçа-тенкĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. СССР халăх хуçалăхне аталантармалли государство займне (1952 çулхи кăларăма) сарнинчен Чăваш АССР бюджетне нумай укçа-тенкĕ кĕрет.

Пирĕн республикăри рабочисемпе колхозниксем тата интеллигенци çĕнĕ заема патриотла пысăк хавхаланупа йышăнса илчĕç. Шупашкар, Улатăр, Канаш хулисенчи ĕçсыннисем уйрăмах паха тĕслĕхсем кăтартрĕç. Пăрачкав, Вăрмар, Муркаш, Комсомольски, Чкаловски, Елчĕк, Куславкка, Канаш, Вăрнар районĕсенчи колхозниксемпе колхозницăсем тата рабочисемпе служащисем çĕнĕ заема политикăллă пысăк активлăхпа çыранчĕç. Пăрачкав районĕнче майăн 10-мĕшĕ тĕлне 369 пин тенкĕ заем çырăнса укçине çийĕнчех тÿленĕ, ку тĕлĕшпе Комсомольски районĕнчи ĕçсыннисем те пуçарулăх ĕçлерĕç. Вĕсем 366 пин тенкĕ заем укçи тÿленĕ. Комсомольски районĕнчи «Красная звезда» колхоз членĕсем 47 пин тенкĕлĕх заем çыраннă, укçине те çав вăхăтрах тÿленĕ.

Чкаловски районĕнчи «Первомайск» колхоз членĕсем заем çырăнма пуçланă кунах 20.500 тенкĕлĕх çырăнса 20 пин тенкине перекет кассине хывнă. Вăрмар районĕнчи «Дружба», «Победа», «Правда» тата Мичурин ячĕпе тăракан колхозсен членĕсем, Чкаловски районĕнчи Киров ячĕпе тăракан, «Гвардеец» колхоз членĕсем çĕнĕ заема пысăк активлăхпа çырăнса илсе большевиксен партийĕ, аслă çулпуçăмăр Сталин юлташ тавра тачă пĕтĕçсе тăнине тепĕр хут уççăн кăтартса пачĕç.

Хальхи вăхăтра республикăри вырăнти Советсемпе финанс органĕсен умĕнче çĕнĕ заема çырăнса илнĕ укçа хисепне çывăх вăхăтра пĕтĕмпех пухса пĕтерес тĕлĕшпе пысăк та ответлă задача тăрать. Заем укçи пухас ĕçе коммунистсемпе комсомолецсене тата ялти актива тăтăшах хутшăнтарни, халăх хушшинче массăллă ăнлантару ĕçне куллен туса пыни кирлĕ.

Çитес вăхăтра республикăри учительсем çуллахи каникула каяççĕ. Район тата хула Совет исполкомĕсен учительсене ĕç укçи тата отпуск укçи вăхăтра тÿлессине йĕркелемелле. Çавăн пекех финанс органĕсен тата вырăнти Советсен финанс ĕçĕнчи çитменлĕхсене палăртса, вĕсене пĕтерме тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла. Июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне налог енĕпе парăмсене пухса çитермелле, государство тупăшĕсене малтан палăртнă срокcенче бюджета кĕртмелле. Хуçалăхпа культура строительствинче тумалли ĕçсем валли укçа-тенкĕ çителĕклĕ таран уйăрса парасси финанс ĕçне иккĕмĕш кварталта мĕнле йĕркеленинчен нумай килет. Çавăнпа та районсемпе хуласенчи Советсен исполкомĕсен укçа-тенкĕ пухас ĕç çине уйрăмах тимлĕ пăхмалла.

Республика бюджетне ăнăçлă тултарассишĕн кĕрешесси—вырăнти Совет руководителĕсен, финанс органĕсен, предприятисемпе учрежденисен тата организацисен руководителĕсен кулленхи тивĕçĕ.

В. ТАВРИН,
Чăваш АССР Финанс министрĕн заместителĕ.

Çĕнĕ вулав çурчĕ

ВĂРНАР. Кĕçĕн-Кипек ял Советĕнчи Çĕн-Алтăш ялĕнче вулав çурчĕ уçрĕç. Вулав çурчĕн заведующийĕ пулса А. Аполлонова юлташ ĕçлет. Халĕ кунта ялти çамрăксем спектакльсем лартаççĕ, вечерсем иртереççĕ. Çак кунсенче «Ĕмĕт» ятлă спектакль лартса пачĕç.

Çавăн пекех вулакансен йышĕ 100 çынна çитнĕ те ĕнтĕ. Кунта кăçсерен çамрăксемпе ватăсем пуçтарăнаççĕ, хаçат-журналсем вулаççĕ, докладсемпе лекцисем итлеççĕ. Ялта вулав çурчĕ уçни колхозлă ял ĕçчĕнĕсен культурине ÿстерме май парать.

Ф. МИХАЙЛОВ.

Колхоз пурнăçĕн тĕп законне çирĕп пурнăçласа пырар

СССР Министрĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ 1946 çулхи сентябрĕн 19-мĕшĕнче ялхуçалăх артелĕн Уставне пăснисене пĕтермелли мерăсем çинчен постановлени йышăнчĕç. Унтанпа районта Устава пăсакансемпе кĕрешес тĕлĕшпе пысăк ĕç туса ирттернĕ. Нумай колхозсене законсăр туртса илнĕ пурлăха, çĕре, укçа-тенкĕне каялла тавăрса панă, ĕçкунне вырăнсăр салатса пĕтерме чарнă, артель хуçалăхне ертсе пырас ĕçри демократине çирĕплетме пулăшнă.

Апла пулсан та Канаш районĕнчи колхозсенче Устава пăснисем пĕтĕмпех пĕтнĕ тесе калама çук-ха. Хăшпĕр колхозсенче халĕ те обществăллă пурлăха саратакансем, ăна вырăнсăр салатса пĕтерекенсем пур.

Чи малтанах, колхозăн обществăллă çĕрне салатакансем пуррине палăртмалла. Хăшпĕр колхозсенче, артель председателĕсем хăйсем Устава пăсас çул çине тăнă пирки, колхоз тара тытса ĕçлеттерекен çынсене е вăрман хуçалăхĕнче ĕçлекенсене пасма параççĕ. Сăмахран, «Мотор» колхоз Быкова тимĕрçĕ пулса ĕçлеме тара тытнă пулнă. Вăл артель членĕ мар. Ăна нихăш енчен пăхсан та пасма пама юраман ĕнтĕ. Апла пулсан та, колхоз председателĕ Арсентьев юлташ тимĕрçĕне 0,15 гектар пасма цартарнă. «Красный Октябрь» колхозра Емельянов объездчика, Жданов ячĕпе тăракан колхозра Якимов объездчика, Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра Тромифов объездчика çĕрулми лартма 0,15-шер гектар таран çĕр панă.

Ял Совечĕсем колхозсенче Устава мĕнле пурнăçласа пынине куллен тĕрĕслесе тăма тата çитменлĕхсем пулсан вĕсене çийĕнчех тÿрлетме тивĕçлĕ ĕнтĕ. Анчах та хăшпĕр ял Совечĕсем ку тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Сиккасси ял Совечĕн председателĕ Матросов колхозра обществăллă çĕре салатма чарас вырăнне хăй Устава пăсас çул çине тăнă. Иртнĕ çулта вăл виçĕ пасма çине çĕрулми лартса илнĕ.

Хăшпĕр колхозсенче ĕçкунĕсене вырăнсăр салатса пĕтереççĕ. Акă, Горкин ячĕпе тăракан колхоза илер Ку колхозра пĕр çынна тимĕрçĕ пулса ĕçлеме тара тытнă пулнă. Колхоз вара ăна хăй патне пурăнма хваттере кĕртнĕ А. Колпакова юлташа кашни кун 0,25 ĕçкунĕ тÿленĕ. Кунта çавăн пекех торф кăларма договорпа каякансене те ĕçкунĕ параççĕ. Чылай колхозсенче артель производствинче тÿрремĕн хутшăнса ĕçлемен çынсен штатне тивĕçлинчен ытлашши ÿстереççĕ. Çавна пула пĕлтĕр районта темиçе пин ĕçкунне ытлашши расходланă. Уйрăмах çавна «Красная Армия», «Соревнование», «Мотор», Чкалов ячĕпе тата Мичурин ячĕпе тăракан колхозсем тăрăх палăртмалла.

Халĕ колхозсенче тĕрлĕрен специальность илнĕ çынсем нумай. Вĕсене пурне те тенĕ пекех колхоз вăйне кĕртсе хатĕрленĕ. Апла пулсан та колхоз правленийĕсем, кашни çынна [illegible] хăй специальноçĕпе ĕçлеттерес вырăнне, урăх çĕртен тара тытма юратаççĕ, артелĕн укçа-тенкипе тырпулне вырăнсăр расходласа пĕтереççĕ.

Колхоз шучĕпе ырă курса пурăнма юратакансем пур-ха. Канаш МТС-ĕнчи Сорокин агронома илер. Иртнĕ çулхи ноябрĕн 1-мĕшĕнчен вăл «Канаш» колхозра агроном пулса ĕçленĕ. Ун хыççăн МТС-а куçнă. Анчах вăл халĕ те колхоз шучĕпе ырă курса пурăнать. Кăçал хăйĕн выльăхĕсене хĕлĕпех колхоз апатне çитерсе пурăннă. Семйи хваттерте пурăннăшăн та колхоза нимĕн те тÿлемен.

Молотов ячĕпе тăракан колхозра обществăллă выльăхсене тĕрĕс-тĕкел пăхса ÿстерме тăрăшмаççĕ. Ку артель председателĕн тата ферма заведующийĕн айăпĕпе тăватă ĕне вилнĕ. Анчах вĕсенчен пĕр пус та шыраса илмен.

Нумай колхозсенче тырпул тата ытти япаласем сутса тунă укçа-тенкĕне банка хывмаççĕ, колхоз кассинчех расходласа пĕтереççĕ. Киров ячĕпе тăракан колхозра кăна çавăн пек майпа 66 пин тенкĕ расходланă. Укçана банкра тытман пирки чылай колхозсенче растрата тăваççĕ, хăйсен кĕсйине чикме тăрăшакансем те пулнă.

Устава пăснин сăлтавĕсенчен пĕри вăл—учетпа отчета тивĕçлипе туса пыманни тата ревизи комиссийĕсем çителĕксĕр ĕçлени пулать. Ялхуçалăх артелĕн Уставĕ кăтартса панă тăрăх, ревизи комиссийĕсем çулталăкра тăватă хут ревизи тумалла. Çакна нумай колхозсенчи ревизи комиссийĕсем пурнăçламаççĕ-ха. Иртнĕ çулта районти 4 колхозра кăна 4 хутчен ревизи тунă. Ыттисенче пĕринче те вăхăтра ревизи туман. Вăхăтра ревизи туман колхозсенче Устава пăснисем те ытларах пулнă.

Ревизи комиссийĕсем япăх ĕçлени районти ялхуçалăх пайĕ вĕсемпе çителĕксĕр ертсе пынинчен нумай килет. Йĕрке тăрăх, ялхуçалăх пайĕн финанспа учет ĕçне мĕнле йĕркелесе пынине кашни колхозра çулталăкра икĕ хутчен тĕрĕслесе тухмалла. Çулталăкра пĕр хут документсем тăрăх тĕрĕслесе ревизи тумалла. Тĕрĕсленĕ вăхăтра ревизи комисси членĕсене те хутшăнтармалла. Иртнĕ çулта ялхуçалăх пайĕ пĕр колхозра та çавăн пек ревизи туман.

Колхозсенче критикăпа самокритикăна тăтăш вăйлатса пымалла. Критикăпа вăйлатни Устава пăсакансене çийĕнчех тăрă шыв çине кăларма кăна мар, колхозниксен политикăллă ăнланăвне ÿстерсе пырса, вĕсене коллективлă хуçалăха ертсе пырас ĕçе активлăн хутшăнтарма та пулăшать.

Н. АРХИПОВ,
Канаш районĕн прокурорĕ.

„Коммунизм ялавĕ" хаçатра çырнă хыççăн

«КОЛХОЗНИКСЕН ВĔРЕНĔВНЕ ХАКЛАМАН ÇĔРТЕ»

«Коммунизм ялавĕ» хаçатăн апрелĕн 8-мĕшĕнчи номерĕнче пичетленсе тухнă «Колхозниксен вĕренĕвне хакламан çĕрте» ятлă статья пирки ВКП(б) Етĕрне райкомĕн секретарĕ Н. Хромов юлташ редакцине çапла пĕлтерчĕ: статьяра илсе кăтартнă фактсем тĕрĕс; колхозсенче агрозоотехникăллă вĕренĕве лайăхлатасси çинчен ВКП(б) райком бюровĕнче сÿтсе явнă.

Ялхуçалăх пропагандине начар йĕркеленĕшĕн виçĕ çуллăх курссен заведующине Лаптева юлташа ĕçрен хăтарнă.

Кăçал агротехника курсĕсен пĕрремĕш çулхи программине 12 колхозра, зоотехника курсĕсен программине 13 колхозра вĕренсе пĕтереççĕ.

Колхозсенче учительсен тата ялхуçалăх специалисчĕсен вăйĕпе лекцисем, докладсем иртерме план тунă.

ХАСТАРЛĂ ĔÇĔН ĂНĂÇЛĂХĔ

Яштака хурăнсемпе топольсем хушшинче пĕр пек стандартлă çуртсем—обществăллă витесем лараççĕ. Вĕсенчен пĕринче—пăрулана ĕнесемпе вăкăрсем, тепринче—пĕтĕ ĕнесем, виççĕмĕшĕнче—пушмак пăрусем, тăваттăмĕшĕнче—çамрăк пăрусем.

Вите варринчи коридор тăрăх икĕ рельса сугалса выртать. Çакă вăл—ферма çуртĕнчи узкоколейка. Фермăра ĕçлекенсем ун тăрăх кашни ĕне патне апат тиесе параççĕ; ĕне вырăнне тасатнă хыççăн унти тислĕке ирĕке илсе тухаççĕ. Витере электричество çутти ялкăшса тăрать. Кашни ĕне умĕнче—апат хумалли валашка. Унтах—автопоилка. Кирек хăш пÿлĕмри ĕне те, хăй хăçан ĕçес тенĕ,—çавăн чухне шыв ĕçме пултарать.

Выльăх апачĕпе лайăхрах усă курас тесе, ятарласа кухня тунă. Апата пĕçерсе хатĕрлес ĕçе пĕтĕмпех механизациленĕ. Çĕрулмипе кăшмана тата ытти тымарçимĕçсене çăвакан машина туяннă. Унпа сехетре пĕр тонна кăшман е çĕрулми çума пулать. Кухньăра апат пĕçерекен хуран лартнă. Унпа пĕр хутра 15 пăт çимĕç пĕçерме пултараççĕ.

Фермăра ĕçлекенсем хăйсен ĕçне чунтан-чĕререн юратаççĕ, выльăхсене зоотехник туса панă расписани тăрăх, рационпа тăрантараççĕ. Шăварассине те, çăвассине те, усă сывлăшра уçăлтарса çÿретессине те яланах расписани тăрăх туса пыраççĕ. Çапла туни выльăх-чĕрлĕх сывлăхне çирĕплетме пулăшать. Ĕнесене кашни талăкра виçшер хут—ирхине, кăнтăрла тата каçхине сăваççĕ. Ĕне çилĕсене сăвас умĕн те, сунă хыççăн та ăшă шывпа çуса тасатаççĕ тата массаж тăваççĕ.

Артель членĕсем кашни çулах силос ытларах хатĕрлеме тăрăшаççĕ. Лайăх хывса хăварнă силоса пур выльăхсем те юратса çиеççĕ. Ĕне выльăхсемшĕн вăл уйрăмах усăллă, мĕншĕн тесен унта витаминсем лайăх сыхланса юлаççĕ. Силоспа тăрантарни сĕт тухăçлăхне ÿстерме нумай пулăшать.

Силос хывас ĕçе колхозниксем тивĕçлипе хаклаççĕ. Силос хывма ятарласа акнă хĕвелçаврăнăшне кăна мар, вăрманти тата сырма-çатрасенчи курăксене те тимлесе пухаççĕ. Çĕрулми аврипе пахча çимĕç çулçисенчен те силос хываççĕ. Фермăра ĕçлекенсем халĕ пурте çакна лайăх пĕлеççĕ: витаминсем çулла—ешĕл курăкра, хĕлле—силосра. Витаминсем сынна çеç мар, выльăхсене те сывлăш пекех кирлĕ. Витаминсем ĕнене вăй параççĕ, сĕт нумай паракан тăваççĕ.

Силос ытларах тума выльăх пăхĕ хатĕрлекен бригада çеç мар, фермăра ĕçлекенсем хăйсем те хытă тăрăшаççĕ. Силос хатĕрлес ĕçе ферма заведующийĕ М. Андреев коммунист ертсе пырать.

Иртнĕ çултан пуçласа, фермăри çамрăк пăрусене пирĕн çĕршыври чи паллă мичуринецсенчен пĕри—Кострома облаçĕнчи «Караваево» совхозра ĕçлекен паллă зоотехник, Сталинла премин лауреачĕ С. И. Штейман меслечĕ тăрăх пăхса ÿстерме тытăннă. Штейман меслечĕ пĕртте ăвкăс мар, ăна кашни колхозрах пурнăçа кĕртме пулать. Çамрăк пăрусем пурăнакан витене час-часах хутса ытлашши ăшă тумаççĕ. Пÿлĕмсене яланах таса тытаççĕ, унти уяма тăтăшах улăштараççĕ. Çапла вара, пăрусем çамрăклах сивĕрех температурăра пурăнма хăнăхса пыраççĕ. Çак майпа пăхса ÿстерекен пăрусем сивĕ çантăлăка чăтăмлăн тÿссе ирттереççĕ, çирĕп сывлăхлă пулаççĕ.

— Пăруран лайăх ĕне çитĕнтерес тесен,—тет фермăра нумай çул хушши ĕçлекен Ефросиния Федорова колхозница,—икĕ япала кирлĕ: пĕри—апат, тепри—пăхма пĕлни. Çамрăк пăрусене тăрантарма пимрен малтан витаминлă апатсем ытларах хатĕрлеме тăрăшас пулать. Пăрăва ÿсме кирлĕ паха витаминсем тин сунă сĕтре нумайрах пулаççĕ. Çавăнпа эпир çамрăк пăрусене малтанхи кунсенче, пĕр-ик эрне хушши, тин сунă ăшă сĕтпе çеç тăрантаратпăр.

Федорова юлташ иртнĕ çулта 43 пăру пăхнă. Вăл пăхакан пăрусем пурте сывă та мăнтăр пулаççĕ. Çакăншăн ăна колхоз ĕçшĕн хушса тÿлемелли йĕрке тăрăх кăçал 4 уйăхри тына пăру панă.

Фермăра кашни ĕнерен куллен мĕн чухлĕ сĕт суса илнине çырса пыма ятарласа журнал тунă. Кун касиччен хăш ĕне мĕн чухлĕ сĕт пани çинчен ферма заведующийĕ кашни каçах колхоз правленине пырса пĕлтерет. Пĕр-икĕ ĕне сĕт чакарнă пулсан, ун çинчен тепĕр кунех правленире сÿтсе яваççĕ, фермăри выльăхсене пăхас ĕçе лайăхлатма пулăшакан мерăсем йышăнаççĕ. Çапла туни ферма работникĕсене дисциплинăллă пулма, хăйсене шанса панă участокра тăрăшса ĕçлеме, выльăхсене пăхса усрас ĕçе лайăхлатма тата ĕçре яланах çĕнĕ те усăллă меслетсем шырама хăнăхтарать.

Ĕнесене лайăх та таса витесенче усранине тата кашни çурах выльăх апачĕ çителĕклĕ хатĕрленине пула, вĕсен тухăçлăхĕ те çултан-çул ÿссе пырать. 1947 çулта кашни ĕнерен вăтам шутпа 500—600 литр сĕт суса илнĕ. Халĕ «Красное Сормово» колхозри ферма работникĕсем çулталăкра вăтам шутпа кашни ĕнерен 1.400 литр сĕт суса илессишĕн кĕрешеççĕ.

Ĕнесенчен сĕт суса илмелли заданине тултарасси тата иртерсе тултарасси çăмăл ĕç мар. Тăрăшни кăна сахал, ĕçе пĕлсе туни кирлĕ. Çавăнпа та зоотехника правилисене куллен-кун вĕренес пулать, малта пыракансен опычĕпе паллашмалла. Çакна фермăра ĕçлекенсем лайăх ăнланаççĕ. Чи лайăх доярккăсенчен пĕри—Елизавета Плотникова çапла калаçса парать:

— Кăçал ĕнесем вăхăтра пăруларĕç. 10 ĕнерен пĕлтĕр эпĕ 11 пăру илтĕм, вĕсене пурне те сывă пăхса ÿстертĕм. Куншăн мана ĕçшĕн хушса тÿлерĕç. Çакă мана тата та тимлĕн тăрăшса ĕçлеме хавхалантарчĕ. Эпĕ кашни ĕне йăлине пĕлетĕп, пĕр ĕне тепринчен мĕншĕн нумайрах е сахалрах сĕт панине лайăх чухлатăп. «Ĕне сĕчĕ унăн чĕлхи çинче», теççĕ.

Ферма работникĕсем çавна асра тытса ĕçлеççĕ. Юлашки çулсенче эпĕ хăшпĕр ĕнесенчен 1.400-шер литр сĕт суса илтĕм. Кашни ĕнерен вăтам шутпа пиншер литр ытларах сĕт суса илтĕм. Ку маншăн, паллах, çителĕклĕ мар-ха. Хамăн юлташăмсемпе Ира Андреевăпа тата Нина Бычковăпа ăмăртса, кашни ĕнерен çулталăкра 2.000-шер литр сĕт суса илме тăрăшатăп.

Е. Плотникова пек тăрăшса ĕçлекен доярккăсем фермăра татах та пур. Зоя Иванова, Ефросиния Федорова тата Ольга Степанова колхозницăсем те ĕçре лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

Ĕне ферминче ĕçлекенсем хĕллехи вăхăтра, ытти фермăсенче ĕçлекенсемпе пĕрле, зоотехникăпа ветеринари наукине тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе республикăри колхозсенче лайăх ĕçлекенсен опытне вĕренеççĕ.

— Халĕ ĕнтĕ,—тет ферма заведующийĕ Андреев юлташ,—пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем те çĕнĕлле ĕçлеме вĕренчĕç. Вĕсем рацион, норма тата апат единицине мĕне пĕлтернине, мĕнле апат хăш выльăх-чĕрлĕхшĕн усăллине аван пĕлеççĕ. Выльăх-чĕрлĕхе хăш вăхăтра мĕнле чир-чĕр ерме пултарассине те, çав чир-чĕрсене хирĕç мĕнле кĕрешмеллине те аван чухлаççĕ. Кĕскен каласан, эпир ĕнтĕ наукăпа сывăххăн туслашма тытăнтăмăр. Çакă вăл ĕçре пысăк ăнăçлăхсем тума пулăшать.

Андреев юлташ хăй лайăх тĕслĕх кăтартса пырать: фермăра виççĕмĕш çул çеç ĕçлет пулин те, унта мĕнле йĕркелĕх пулмаллине лайăх ăнланать, кашни ĕне е пăру сывлăхне çирĕп пĕлсе тăрать. Фермăра ĕçлекенсем хушшинчи социализмлă ăмăртăва тăрăшса организацилет.

Ялхуçалăх наукисен В. И. Ленин ячĕпе тăракан Пĕтĕм Союзри академийĕн 1948 çулхи август уйăхĕнче пулнă сессийĕнче, Т. Д. Лысенко академик тунă доклада сÿтсе явнă чухне, Кострома облаçĕнче ÿстернĕ ĕнесен ăратлă йăхне ытти вырăнсене сарас тĕлĕшпе ĕçлекен хуçалăх директорĕ В. А. Шаумян юлташ хăйĕн сăмахĕнче ĕнесен чĕрĕ виçипе вĕсен тухăçлăхĕ мĕнле пулмалли çинчен интереслă даннăйсем илсе кăтартнă. Вăл ун чухне çапла каланă:

— 20 çул хушшинче, уйрăмах юлашки 10—13 çул хушшинче, «Караваево» совхозри ĕнесене питĕ лайăх тата тĕрлĕ апатпа тăрантарса усранă. Сăмахран, акă, 1928 çулта кашни сăвакан ĕне валли 3.256 апат единици расходланă, хăшпĕр çулсенче ĕнесене паракан единица 6 пинрен те иртнĕ. Кашни ĕнене тăрантарма 1.000—2.500 килограмм концентратлă апат пĕтернĕ. Çакна май вара ĕнесенчен сĕт суса илесси те чылай ÿснĕ: малтан кашни ĕнерен 3.389 килограмм сĕт суса илнĕ, 1940 çулта 6.310 килограмм таран сĕт суса илме пуçланă. Кĕтÿри кашни ĕнен чĕрĕ виçи вăтам шутпа 649 килограма çитнĕ. Кĕтÿре пĕтĕмпе 70 ĕне ытла пулнă, вĕсем кашниех 8-шар пин килограмм ытла сĕт панă. Хăшпĕр вăйлăрах ĕнесенчен 10—13-шар пин килограмм таран та суса илнĕ. «Послушница II» ятлă ĕне, тĕнчере чи паллă рекордистка ятне илме тивĕçлĕ пулнăскер, 387 кун хушшинче 16.239 килограмм сĕт панă. Унăн сĕтĕнче 3,92 процент çу пулнă. Талăкра кашни ĕнерен 45—50 тата 60-шар килограмм сĕт суса илесси халĕ ĕнтĕ çĕнĕ япала мар. Ятарласа уйрăм апат çинче тăмасăрах, 850—950 килограмм таякан ĕнесем халĕ çав совхозра вуншарăн шутланаççĕ.

Совет ученăйĕ каланă çак сăмахсене «Красное Сормово» колхозри колхозниксем пĕлеççĕ. Вĕсем те халĕ «Караваево» совхозри пек сĕт нумай паракан ĕнесем ÿстерме ĕмĕтленеççĕ: ĕнесен ăратлăхне çултан-çул лайăхлатса пыраççĕ, сĕтекле апатсем ытларах та ытларах хатĕрлеме тăрăшаççĕ.

* * *

Çакăн пек тимлĕ кĕрешÿ «Красное Сормово» колхозри колхозниксем виçĕ çул каялла пуçласа янă. «Колхозсемпе совхозсенче обществăллă продуктивлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессине вăйлатмалли виçĕ çуллăх план çинчен» СССР Министрĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ йышăннă постановленине сÿтсе явнă чухне «Красное Сормово» колхоз членĕсем, пурте пĕр шухăш-кăмăллă пулса, çапла каланă: халĕ ĕнтĕ пирĕн тырпул акса тăвассине çеç мар, обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе те мĕн май килнĕ таран вăйлатса пымалла; сĕт-çу, аш-какай, çăмарта ытлăн-çитлĕн пулмалла, тенĕ.

Обществăллă продуктивлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессине вăйлатмалли виçĕ çуллăх план çинчен партипе правительство йышăннă постановлени колхозниксене хавхалантарнă, вĕсем хĕрÿллĕ ĕçе тытăннă: хăйсен уй-хирĕсенче тĕрĕс пусă çаврăнăшĕ тунă, курăксем ытларах акма, выльăх апачĕсем ытлăн-çитлĕн хатĕрлеме пуçланă, фермăсенче ĕçлекен работниксене вĕрентес ĕçе тăрăшса йĕркеленĕ.

Колхозра халĕ тăватă ферма: ĕне, сурăх, сысна тата кайăк-кĕшĕк фермисем. Обществăллă продуктивлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли 1952 çулхи плана колхоз ĕне выльăх енĕпе 135 процент, сурăхсем енĕпе—127 процент, сыснасем енĕпе—92 процент, кайăк-кĕшĕк енĕпе—132 процент, лашасем енĕпе 100 процент тултарнă. Колхозри обществăллă витесенче халĕ çакăн чухлĕ выльăх-чĕрлĕхпе кайăк-кĕшĕк усраççĕ: ĕне выльăхсем—277 (сăвакансем 94), сыснасем—473, сурăхсем—532, лашасем—302, кайăк-кĕшĕксем—1.641.

Колхозри фермăсен ĕçне лайăхлатса пынă май, обществăллă выльăх-чĕрлĕхĕн таварлă продукцийĕ çултан-çул ÿссе пырать. Государствăна аш-какай парса тата аш-какая пасарта сутса, колхоз иртнĕ çулта 70 пин тенкĕ ытла тупăш илнĕ.

М. ЮРЬЕВ.
Муркаш районĕ,
«Красное Сормово» колхоз.

Малта пыракансен опычĕпе паллаштаратпăр

Кантăр—пысăк тупăш паракан культура

(Канаш районĕнчи «Аниш» колхоз агротехникĕ И. Добросмыслов юлташ каласа пани)

Тăватă çул каярах пирĕн колхоз тухăçлă кантăр туса илеймен. Кашăк аври тăршшĕ кăна ÿсекен кантăр ни государствăна пама, ни хамăрăн хуçалăхри кушасене саплама çитмен. Вăрлăха та çуллен кÿршĕри колхозсенчен сутăн илсе акаттăмăр. Çавна пула хăшпĕр колхозниксем ăна акма пăрахасси çинчен каласма пуçланăччĕ.

Кантăр колхозшăн та, промышленноçшăн та питĕ кирлĕ культура. Эпир хăшпĕр кая юлнă колхозниксем хыççăн каймарăмăр, кантăр акса тăвас ĕçĕн агротехникине аванлатса унăн тухăçлăхне ÿстерес тĕллев тытрăмăр. Агротехника кăтартнă пек ĕçлеме пуçласан, кантăр тухăçлăхне самаях ÿстертĕмĕр. Пĕлтĕр эпир 4 гектар çинчи кашни гектартан 5 центнер вырăнне 10 центнер сÿс, 4 центнер вырăнне 7,5 центнер кантăр вăрри туса илтĕмĕр. Кантăр тăршшĕ 2 метра яхăн пулчĕ.

Мĕнле майпа кантăр тухăçлăхне ÿстерме пултартăмăр-ха эпир?

Ялан пĕр вырăна аксан, çĕр ывăннă пирки, тырпулсен тухăçлăхĕ чакать. Кантăр апла мар. Çĕре çĕнетсех тăрсан, ăна пĕр вырăнта темиçе çул хушши акма пулать. Пирĕн колхозра çак уйрăмлăха шута илмен пирки кантăра кашни çул тĕрлĕ вырăна акнă. Халĕ эпир ку çитменлĕхе пĕтертĕмĕр. Колхозра ятарласа кантăр акмалли вырăн уйăрнă. Анчах пĕр хăрушлăх пур: ялан пĕр вырăна аксан, кантăра сиен кÿрекен хурткăпшанкăсемпе чирсем сарăлма пултараççĕ. Ку инкекрен хăтăлас шутпа тепĕр вырăнта кантăр акмалли участок хатĕрлетпĕр. Хурткăпшанкăсемпе чирсем сарăлни сисĕнме пуçласан, кантăра малтан лайăх çĕнетсе хатĕрленĕ вырăна акма тытăнатпăр.

Кантăр акмалли вырăна хатĕрлесси. Кантăр акмалли вырăна октябрĕн 5—10-мĕш тĕлĕнче кĕрхи çĕртме туса хăваратпăр. Кĕрхи çĕртме тунă чухне тăпрана 22 сантиметр тарăнăшĕнчен кая мар сухалатпăр. Кантăр нÿрĕке юрататакан культура. Çавна шута илсе, кĕрхи çĕртме тунă вырăна хĕлле 3—4 хут юр тытатпăр. Нÿр ытларах тытса хăварас шутпа çуркунне тăпрана сÿрелетпĕр. Кун хыççăн тислĕк салататпăр тата минераллă удобренисем сапса 18 сантиметр тарăнăш сухаласа сÿрелетпĕр.

Çĕре çĕнетесси. Çĕре çĕнетнине кантăр пур культурăсенчен те ытларах юратать. Лайăх çĕнетнĕ вырăна аксан, вăл кирек мĕнле тăпра çинче те тенĕ пекех ăнса пулать.

Кантăршăн чи лайăх удобрени вăл — тислĕк. Кантăр акмалли вырăна эпир малтанхи çул 90 тонна тислĕк кăларнă. Агротехникăна тĕрĕс пурнăçлас тесен, тислĕке кĕркунне кăларса кĕрхи çĕртме туса хăвармалла.

Тислĕк кăларнипе пĕрлех, минераллă удобренисем çинчен те манма юрамасть. Ку таранччен эпир кашни гектар çине 1,5 центнер суперфосфат кăларнă.

Çĕре минераллă удобренипе çĕнетни сÿс тухăçлăхне ÿстернипе пĕрлех, унăн пахалăхне нумай аванлатма пулăшнине те кăтартса пачĕ. Кăçал эпир кантăр акмалли вырăна тислĕк кăларнисĕр пуçне, кашни гектар çине 1,5 центнер кали тăварĕ, 1,5 центнер суперфосфат сапса çĕнететпĕр. Минераллă удобренисене пĕрле хутăштарса сапма палăртнă.

Калчасене апат пани те кантăр тухăçлăхне чылай ÿстерме пулăшать. Кантăра эпир минераллă удобренисемпе икĕ хутчен апат паратпăр. Малтанхи хут калча шăтса тухсан 5—8 кунран, иккĕмĕшне—малтан апат панă хыççăн 10—15 кунран. Апата типĕлле майпа тата ирхи сывлăм типсен паратпăр. Унсăрăн минераллă удобрени çулçă çумне сыпăçса ларса калчана сиен кÿме пултарать.

Апат панин пĕлтерĕшĕ пысăк. Калчана апат парсан, эпир кантăра ÿстерессине хамăра кирлĕ пек йĕркелеме пултаратпăр. Сăмахран, азотлă удобренипе апат парсан, кантăра вăрăмрах ÿсме пулăшатпăр, фосфорлă удобренисем сапсан, кантăр вăррин тухăçлăхне ÿстеретпĕр.

Кантăра акасси. Лайăх пулса çитнĕ участокран пуçтарса илнĕ кантăр вăррине вăрлăхлăх хăваратпăр. Вăрлăха кĕркуннех лайăх тасатса хатĕрлетпĕр. Шултра тата ытла вĕтĕ пĕрчĕсене акмастпăр. Вăтам пĕрчĕсене аксан, пуса сахалтарах пулать.

Тăпра 10 градус таран ăшăнсан, кантăра пĕр кун хушшинчех сеялкăпа 4—5 сантиметр тарăнăшне акса хăваратпăр. Акнă хыççăн тăпрана сÿре тăршшипе кăларттарса тикĕслетпĕр. Итемри çĕрĕк улăма пуçтарса, кантăр пусси çине пĕр сантиметр хулăнăш сарса тухатпăр.

Пăхса ÿстересси. Ăшă тата нÿрĕ тăпра çине аксан, кантăр 4—6 кунран шăтса тухать. Тепĕр чухне, вăйлă çумăр хыççăн, тăпран çиелти сийĕ хытса пĕрчĕсене шăтса тухма чарма пултарать. Кун пек чухне эпир тăпрана йăрана урлă пĕр хут сÿрелесе çемçететпĕр.

Ĕлĕкрех эпир кантăра çумламан. Халĕ çумкурăксенчен 2—3 хут тасататпăр.

Кантăра пуçтарса кĕртесси. Ку ĕç хăйне майлăрах, икĕ тапхăрта тумалли ĕç, мĕншĕн тесен пусапа кантăр пĕр вăхăтра ĕлкĕрмесçĕ. Пусана эпир унăн туни сарăхнă, çÿлçисем ÿкме, çÿлти çеçкисем кăшт силлесенех тăкăнма пуçланă вăхăтра, 4—5 кун хушшинче татса пĕтеретпĕр. Каярах юлса пуçтарсан, унăн сÿсĕ пĕр пек пулмасть тата пуса хăрса çапкаланнă пирки ăна пуçтарса илме кансĕр. Татнă хыççăн пусана пĕчĕк купасем туса типĕтетпĕр. Çанталăк аван тăнă вăхăтра вăл 4—5 кун хушшинче типсе çитет.

Кантăра пучахăн вăтаçĕрти пĕрчисем ăвăс пек пулса çитсен, алăпа 5—6 кун хушшинче тататпăр. Çÿлерехри пĕрчĕсем купа туса типĕтнĕ вăхăтра тулса çитессĕ. Вара кантăр вăррине унра 13 процент таран нÿр тытăнса тăракан пуличчен типĕтетпĕр те, сыхласа усрама хуратпăр, государствăна паратпăр.

Пусана кĕркунне, кантăра çăва тухсан шыва хутса пултаратпăр. Шывра мĕн вăхăт вырттарасси шывăн температуринчен тата вăл пĕр вырăнта кÿленсе тăнипе тăманнинчен килет. Шыв ăшă тата пĕр вырăнта кÿленсе тăрсан, кантăр часах пулать, сивĕ тата юхать пулсан, пĕр уйăх та выртма пултарать. Сÿс кантăр шăмми çумĕнчен çăмăллăнах хăпăнма тытăнсан, кантăра кăларса типĕтмелле.

Кантăра хĕллехи вăхăтра шăши касасран хытă сыхламалла. Шăшисем ан илленччĕр тесе, эпир кантăр çурăмĕсене кĕлте типĕтекен авăн çине капан пек купаласа хуратпăр. Авăн вучахне вăхăтран вăхăта вут хурса тĕтĕм кăларатпăр. Тĕтĕм шăршине сиссен, шăшисем илленмесçĕ. Çапла вара, кантăр çурăмĕсем хĕл касиччenex лайăх усранаççĕ.

Сосновка поселокĕнчи (Шупашкар) 4-мĕш вăтам шкулта.
УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: 9-мĕш класра вĕренекенсем математика урокĕнче. Малти вырăнта — Нина Поповăпа Евгения Уракова.
А. КОСТИН фотоÿкерчĕкĕ.

Шкул-санатори

Чÿречерен пăхсан аслă Атăл куçа илĕртет. Аякран тухсанах сип-симĕс ласисене чух тытса тăракан хырсем мăнаçлăн курăнаççĕ. Кунта шкул-санатори. Рабочисемпе колхозниксен ачисем сываласçĕ, вĕренеççĕ кунта. Вĕсемшĕн мĕн кирли пурте пур: ытлăн-çитлĕн апат-çимĕç, выртса тăмалли ăшă пÿлĕмсем, вĕренмелли классем.

Эпир пысăк çутă пÿлĕмре. Урайне кавир сарнă. Чÿречесем умĕнче чечексем ешереççĕ. Сĕтел çинче кĕнекесем. Тĕпелте рояль ларать. Стенасем çинче портретсемпе плакатсем. Пÿлĕмĕн икĕ аяккинче те алăксем. Вĕсем ачасем вĕренекен классене илсе кĕреççĕ.

Пирĕн умма торфопредприятинче ĕçлекен рабочин ывăлĕ—Витя Андреев пырса тухрĕ. Вăл вунтăваттăра, çиччĕмĕш класра вĕренет, отличник. Иртнĕ çул вăл ури ыратнипе йывăр чирлĕ выртнă, больницăра ăна операци тунă. Тухтăрсем вăхăтлăха вĕренме хушман. Унтан Витьăна çак шкул-санаторине илсе килнĕ. Пирвайхи икĕ эрнере вăл изоляторта кăна пурăннă: тухса çÿреймен, апатне те вырăн çинче кăна çинĕ. Халĕ ĕнтĕ ун çине пăхса савăнмалла: пичĕ чăмăркка, куçĕсем савăнăçлă: «Эпĕ йĕлтĕрпе те çÿрекелерĕм кăçал», тет Витя. Чăнах та алли́нчи патакĕ пулмасан ăна никам та чирленĕ тесе калас çук.

Пĕр хĕрача класран каярах юлса тухрĕ.

— Аля Коханина! — паллаштараççĕ пире унпа.

Альăн пичĕ хăмач пек хĕрлĕ, майĕнчи галстукне тулли ÿчĕ тăп тытса тăрать.

Ытти ачасем те савăнăçлă та телейлĕ, тĕпĕртетсе кăна çÿреççĕ.

— Пирĕн пата сывалма килнĕ ачасем уроксене лайăх вĕренме пуçларĕç,—тет Базанова учительница.

Вова Бикерт, Людмила Коробкова, Поля Петрова, Миля Старова, Галя Куликова иртнĕ чĕрĕке отлично вĕçленĕ. Вĕсем ыттисене те нумай пулăшаççĕ.

Шкулта халĕ экзаменсем пама хатĕрленеççĕ: малтан вĕреннисене тепĕр хут аса илеççĕ, билет çинчи ыйтусене ответленĕ май йывăр темăсене тарăнрах вĕренеççĕ, çĕнĕ задачăсемпе примерсем шутлаççĕ. Воспитательсем ачасене питĕ юратаççĕ, уроксене хатĕрлеме пулăшаççĕ, çĕнĕ вăййисем вĕрентеççĕ. Уроксем хатĕрлесе пĕтерсен ачасем шашка-шахматла, доминолла, лотола выляççĕ. Пионер пÿлĕмĕнче ачасене мĕн кирли пурте пур. И. А. Крыловăн «Слонпа Моська», «Тĕкĕрпе упăте» баснисем тăрăх илюстрацисем хатĕрленĕ. Вырăс халăхĕн юмах-халапĕсем тăрăх темиçе тĕрлĕ ÿкерчĕксемпе пуканесем туса хунă. Акă, вĕсенчен пĕри: старикпе карчăк, вĕсен хĕрĕ тата йыттипе кушакĕ, шăшийĕ пĕр-пĕринчен тытса, хыттăн туртса çарăк кăлараççĕ.

Виçĕ упа çинчен хунă юмах тăрăх та пуканесем туса кăтартнă. «Хĕрлĕ калпак» юмахран илнĕ япаласем те пур унта. Пионервожатăй А. Савельева юлташ çĕнĕ юмахсем вуласа парать. Ачасем вара татах та илемлĕ пуканесем шухăшласа тупаççĕ.

Ачасем хăйсем сывалса пыни, лайăх пурăнни, аван вĕренни çинчен ашшĕ-амăшĕсене çырса пĕлтереççĕ.

Вова Сергеев тăххăрта кăна-ха, вăл иккĕмĕш класра вĕренет. «Аттене те, сана та пысăк салам! Кунта пире питĕ лайăх пăхаççĕ»—тесе çырать вăл амăшĕ патне. Лена Яфаркина вунтăватă çула çитет. Вăл тантăшĕ патне хăй чĕрĕлни, шкулта лайăх вĕренни çинчен çырать.

Иртнĕ кĕркунне туса пĕтернĕ çĕнĕ пысăк çуртра пурăнаççĕ ачасем. Вĕсен вырăнĕсем тирпейлĕ те таса: пружиналлă матрацсем, çемçе минтерсем, шурă простыньсемпе ăшă çивиттисем.

Шкулта Павлик Морозов ячĕпе тăракан пионерсен дружини пур. Пионерсем валли хаçат-журналсемпе вылямалли япаласем нумай илсе панă. Пионерсем юрăташă, музыкăна вĕренмелли, алă ĕçĕ тумалли кружоксене юратса çÿреççĕ. Çитес сбор Павлик Морозов çинчен пулмалла. Паттăр пионерăн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен ачасем кĕнекесем вулаççĕ, ÿкерчĕксем тăваççĕ.

Иртнĕ çулта кăна ачасем валли виçĕ пин экземпляр кĕнеке туяннă. Шкул библиотекинче чăвашла кĕнекесем те сахал мар. Чăваш ачисем вĕсене юратса вулаççĕ. Каникул вăхăтĕнче вулакансен конференцийĕ пулса иртнĕ. Ачасем хăйсем патне Чăваш халăх поэчĕ Петĕр Хусанкая тата чăвашсен паллă поэчĕ Уйăп Мишшине чĕннĕ. Вĕсем унта хăйсен произведенийĕсен уйрăм сыпăкĕсене вуласа панă.

Ку шкул çĕнĕ. Ăна 1948 çулта кăна уçнă. Кĕске вăхăтрах кунта пысăк ĕçсем тунă. Нысăк мунча, çĕнĕ столовăй, ачасен сывлăхне тĕпчесе сăнамалли уйрăм пÿлĕм çĕнĕрен тунă.

Вăрманти шкул-санатори партипе правительство совет ачисемшĕн тимлĕн тăрăшнине кăтартакан нумай тĕслĕхсенчен пĕри пулса тăрать.

В. ПЛЕШКОВ.

Ача-пăча литературине çÿлти пусăма хăпартассишĕн

Майăн 13-мĕшĕнче Шупашкарта чăваш писателĕсемпе художникĕсен тата издательство работникĕсемпе хулари учителĕсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху «Пĕтĕм Союзри ача-пăча литератури канашлăвĕн итогĕсем тата чăваш писателĕсем умĕнче тăракан задачăсем» çинчен И. Ильбеков юлташ докладне сÿтсе явpĕ.

Ача-пăча литератури совет влаçĕ çулĕсенче пысăк çитĕнÿсем турĕ. А. Гайдар, Н. Островский, А. Фадеев, Б. Полевой, В. Катаев, В. Каверин, М. Пришвин, С. Григорьев, Б. Житков, Л. Кассиль, В. Осеева, М. Придежаева, А. Мусатова, Н. Носов тата ытти нумай писательсем çырнă паха произведенисем ача-пăча литературин ылтăн фондне кĕрсе юлчĕç. Асăннă писательсен нумай произведенийĕсене чăвашла куçарнă. Вĕсене пирĕн ачасем юратса, хавхаланса вулаççĕ.

Малтанхи чăваш писателĕсем И. Я. Яковлев, К. В. Иванов, Н. П. Шелепи тата совет влаçĕ çулĕсенче ÿссе çитĕннĕ чăваш халăх поэчĕсем С. Элкер, П. Хусанкай, Я. Ухсай тата Л. Агаков, А. Ĕçхĕл, Уйăп Мишши, А. Алга çырнă произведенисене те тăван халăхăн çамрăк ăрăвĕ юратса вулать.

Чăвашсен ача-пăча литератури, мĕнпур ытти халăхсен ача-пăча литератури пекех, партипе Совет правительстви, И. В. Сталин юлташ яланах тăрăшнипе пула ÿссе чечекленчĕ.

Анчах чăваш писателĕсем çыракан хăшпĕр кĕнекесем идея енĕпе те, художество енĕпе те пирĕн çамрăксене çаплах çырлахтараймаççĕ-ха. Писательсем паянхи ачасен пуян пурнăçне çителĕклĕ тĕпчесе вĕренмеççĕ. Çавна пула ĕнтĕ, пирĕн писательсем хăйсен произведенийĕсенче ачасене хумхантаракан пысăк ыйтусене сивĕччĕн хускатмаççĕ. Чăваш писателĕсем çамрăксене Ленинпа Сталинăн ача чухнехи пурнăçĕ çинчен, коммунизмăн аслă стройкисем çинчен халиччен те паха произведенисем çырайман. Уйрăмах ача-пăча драматургийĕ тата критика кая юлса пыраççĕ.

Пренире тухса каланă писатель А. Кăлкан хăйĕн сăмахĕнче чăваш литературинчи паллă писательсем юлашки çулсенче ача-пăча литератури çине кирлĕ таран пăхманни, уйрăммăнах ача-пăча драматургийĕ юлса пыни çинчен каларĕ.

— Ача-пăча литературине çÿлти пусăма хăпартас тĕлĕшпе пур писательсен те интересленмелле, кĕске хушăрах пысăк идейăллă илемлĕ произведенисем çырмалла—тет вăл.

Художник Г. Харлампьев ачасем валли хитре ÿкерчĕклĕ кĕнекесем кăларма пур условисем те пурри çинчен каларĕ.

— Çавăн пек кĕнекесем кăларас тесен,—тет вăл,—художниксемпе кĕнеке авторĕсен тата издательство работникĕсен пĕр-пĕринпе тачă çыхăнса, килĕштерсе ĕçлемелле. Анчах та çав тачă çыхăну пирĕн хушăра халиччен те çук-ха.

Г. Пласкин пуçламăш классенче вĕренекенсем валли кăларнă «Çулталăк» ятлă сăвăсен сборникĕ çинче чарăнса тăчĕ.

Ача-пăча писателĕ Кузьма Чулкас кĕнеке куçаракансем çинчен чарăнса тăчĕ.

— Издательствăри ача-пăча литератури секторĕн ответлăхĕ пула, — тет вăл,—вырăс литературинчи чи лайăх произведенисене тăван чĕлхене пĕлмен çынсем куçараççĕ. Çамрăксем валли куçаракан кĕнекесем оригиналти пекех пулмалла, вĕсем çăмăл та ансат вуланмалла. Кĕнекесене чăваш литератури чĕлхине тĕплĕ пĕлекен çынсене çеç куçарттармалла.

Чăвашсен государство издательствин директорĕ Н. Золотов юлташ ача-пăча литературинче пысăк çитменлĕхсем пурри çинчен каларĕ. Вăл халиччен писательсен организацийĕпе издательство тата Çутĕç министерстви хушшинче çирĕп çыхăну пулманнине палăртрĕ. Ачасем валли çырнă произведенисене пичетлесе кăлариччен малтан шкулсенче сÿтсе явмалла.

Чăваш АССР Çутĕç министрĕн заместителĕ Г. Ефремов юлташ писательсем паянхи шкул пурнăçне тарăн çутатса пама тăрăшманни çинчен каларĕ.

— Элкер, Хусанкай, Ухсай тата ытти паллă писательсем,—тет вăл,—юлашки çулсенче ачасен пурнăçĕпе сахал интересленеççĕ, ача-пăчасем валли çыракан çамрăк писательсене те кирлĕ пек пулăшу памаççĕ. Пирĕн писательсем шкулсенче сахал пулаççĕ, коллективсемпе тата организацисемпе тĕплĕн интересленмеççĕ. Кашни писателĕн çитĕнекен ăрăва коммунизмлă воспитани парса ÿстермелли произведенисем çырма тăрăшмалла.

А. Алга поэт хăй мĕнле ĕçлени çинчен каласа кăтартрĕ.

А. Алга хăйĕн сăмахĕнче уйрăммăнах пирĕн шкул çулне çитмен ачасемшĕн нимĕнле кĕнекесем те çуккине палăртрĕ, малашне вĕсем валли «Манăн пĕррĕмĕш кĕнеке» ятлă сери кăларса тăма сĕнÿ пачĕ.

ВЛКСМ Чăваш обкомĕн секретарĕ Г. Кудряшов юлташ писательсем конкурса çителĕксĕр хутшăнни çинчен каларĕ, вĕсене шкул пурнăçĕпе ытларах интересленме чĕнчĕ.

Пухура çавăн пекех В. Канюков учитель, Ф. Осипов художник тата ытти юлташсем те тухса каларĕç.

— Паянхи пуху чăвашсен ача-пăча литературине малалла аталантарас ĕçре пысăк вырăн йышăнать. Çамрăксем валли çыракан писательсем, тухса каланă юлташсен сĕнĕвĕсене пурнăçласа, малашне паха произведенисем çырĕç,—тет писательсен союзĕн правлени председателĕ Л. Агаков юлташ.

Чăваш халăх культури çинчен тунă доклад

Çак кунсенче Чăвашсен чĕлхепе литература тата истори тĕлĕшпе ĕçлекен Наукăпа тĕпчев институтĕнче СССР Наукăсен академийĕн Хусанти филиалĕн профессорĕ, истори наукисен докторĕ Н. Воробьев юлташ «Чăваш халăхĕн материальнăй культурине тĕпчесе вĕренес ĕçĕн кĕске итогĕсем» тема тăрăх доклад туса пачĕ. Вăл хăйĕн докладĕнче чăваш халăхĕн пурнăçпа йăла условийĕсем лайăхланса пынă май, унăн культури те хăвăрт ÿссе пынине тĕплĕн çутатса пачĕ. Докладчик чăвашсен культури пурăнмалли çуртсем тăвас тĕлĕшпе те, кĕпе-тумтир тăхăнассинче те, апат-çимĕç хатĕрлес ĕçре те ĕлĕкхинчен нумай улшăнса çĕнелнине паха примерсемпе уççăн кăтартса пачĕ. Çакă вăл пĕтĕмпех партипе правительство, аслă çулпуçăмăр И. В. Сталин юлташ ĕççыннисен пурнăçне лайăхлатассишĕн куллен тăрăшнипе пулма пултарнă.

Доклад тăрăх прениpе чылай юлташсем сăмах тухса каларĕç. Вĕсем Н. Воробьев профессора чăваш халăхĕн культура ÿсĕмне тĕпчесе вĕренес тĕлĕшпе ирттернĕ экспедицине лайăх ертсе пынăшăн тав турĕç тата çак экспедици ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлеме сĕнчĕç.

Критикăпа библиографи

Александр Артемьев калавĕсем пирки

Александр Артемьева вулакансем унăн юлашки çулсенче çырнă калавĕсемпе повеçĕсем тăрăх пĕлеççĕ. Артемьев нумай çырать, Совет Союзĕнчи ĕççыннисен мирлĕ ĕçне хăйĕн произведенийĕсенче тĕрĕс те тулли кăтартса пама тăрăшать. Автор художествăллă маçтăрлăхпа пĕлсе усă курать, ăнланмалла, халăха кăмăла каякан чĕлхеве çырать, çавăнпа унăн произведенийĕсене юратса вулаççĕ.

Паллах ĕнтĕ, Артемьев пек ÿссе пыракан автор хăшпĕр чухне хăйĕн творчествинче чылаях пысăк йăнăшсем туни, писсе çитмен калавсенех пичетлеме тăрăшни вулакансене питех те кÿрентерет.

Çак статьяра эпир Александр Артемьевăн хăшпĕр калавĕсене тишкерсе тухасшăн, унăн пысăк йăнăшĕсене кăтартса парасшăн.

«Ялав» журналăн иртнĕ çулхи 10-мĕш номерĕнче пичетленĕ «Эпир — миршĕн!» калавăн тĕп шухăшне вулакансем аванах астăваççĕ. Паллăх, çак калава А. Артемьев ырă кăмăл-туйăмпа — миршĕн кĕрешес ĕçе активлăн хутшăнас кăмăлпа çырнă. Ку туйăмран пахи мĕн пултăр-ха хальхи кунсенче!

Анчах пĕлес килет: хăйĕн шухăш-кăмăлĕсене, хăй умне лартнă тĕллеве автор çак калавра мĕнле пурнăçланă-ха? Кăна эпир калавăн шухăшĕпе тĕплĕн паллашсан пĕлме пултаратпăр.

...«Эпир—миршĕн!» калаври герой — Петĕр пулеметчик — фронтра ăнсăртран хăйĕн юлташне — калав авторне тĕл пулать. Пăхăр-ха эсир, вулакан юлташсем, çак тем-тем асап тÿссе курнă шухăторуллă та паттăр салтакăн пирĕн çар малалла кайса пынă вăхăтра епле шухăш-туйăмсем пулнине. Петĕр хăйĕн кунçулĕ тĕллĕ-йĕрлĕ мар йывăр килсе тухнишĕн кÿренет. «Эх! Çак алăсемпе пулемет сĕтĕрсе çÿремеллеччĕ-и?»—тет вăл. Çавăнпах ĕнтĕ унăн çак тем йывăрăш пулемета сĕтĕрсе çÿрес килмест. «А. сирĕн, стрелоксен, мĕскер вăл — тăватă кило çуралла винтовка? Ырă çыннăн кĕлте сенĕкĕ те унран йывăртарах», — тесе питлеме пăхать Петĕр стрелоксене.

Автор та хăйĕн геройĕсем пекех шухăшлать имĕш, ăна та иккĕленÿллĕ шухăшсем çавăрса илеççĕ. «Хам эпĕ траншея тĕпĕнче тăрăхса ларатăп: çамрăк вăхăта усăсăр иртертĕм пек туйăнать, мĕн чухлĕ ырă вăхăта сая янă!»—кÿренсе калать автор. Калав авторĕн пуçне хĕрÿ çапăçу пынă кунсенче çакăн пек киревсĕр шухăшсем пырса кĕреççĕ: «...вăрçă хирĕнче апат мĕн тери тутланнине тек нихçан та пĕлмелле ан пултăрах, пулас ачамсен ачисем те окопра апат çисе ан курччăр...»

Çук, тĕрĕс мар шухăшлать Александр Артемьев! Вăрçăра пирĕн салтаксем ун пек калама пултарайман. Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне сыхласа хăварнă пирĕн салтак. Отечественнăй вăрçăн малтанхи кунĕсенчен пуçласах хамăр çар тăшмана сĕнтерессине шанса тăнă, çав шанчăк пуррине пула вăл вăйлă та усал тăшмана хаяр çапăçура сĕнтернĕ.

«Эпир—миршĕн!» калавра ырă шухăш-кăмăлсем çук тесе каласшăн мар эпир, анчах сÿлте асăннă сиенлĕ шухăшсем калавăн паха енĕсене пĕтĕмпех хуплаcа хураççĕ.

Халĕ тата А. Артемьевăн тепĕр калавне, «Ялав» журналăн кăçалхи пĕррĕмĕш номерĕнче пичетленнĕ «Чаплă хушамат» новеллăна илсе пăхар-ха. «Чаплă хушаматăн» тĕп шухăшĕ—совет влаçĕ çулĕсем хушшинче калама çук ÿссе кайнă Шупашкар хулине кăтартса парасси. Новеллăна вулама пире хула сăн-сăпачĕ лайăхланни çеç мар, ăна ÿссе çитĕнме хамăрăн тăван партипе правительство мĕн тери нумай пулăшнине пĕлес кăмăл та илĕртсе тăрать. Чăваш республики столицин—Шупашкарăн кулленех чечекленсе пыракан сăн-пичĕ çине авторпа пĕрле пăхса савăнас килет пирĕн.

Анчах савăнма ан васкăр-ха эсир. Малтан новеллине вулама тытăнар: тен, унăн шухăшĕ сире кÿрентерсе ярĕ. Енепес килмест, анчах чăнлăха ăçта пытарăн-ха: «Чаплă хушамата» вуласан, эпир ытла тĕлĕнтĕмĕр, япăх новелла çырнăшăн автор çине ытах кÿрентĕмĕр, пирĕн пуçа ирĕксĕрех çакăн пек шухăш пырса кĕчĕ: ку—пирĕн чăн пурнăçа пăсса кăтартни пулать вĕт!

...Акă колхозлă ялтан хулана Иванов хушаматлă паллă стахановец патне унăн ашшĕ Лаврас мучи хăнана килет. Лаврас мучи—«Чаплă хушаматăн» тĕп геройĕ—тăхăр тиртен çĕлетнĕ тăхăрвун тăхăр пĕрмеллĕ сап-сар кĕрĕк, пăру тирĕнчен çĕленĕ пысăк çĕлĕк тăхăннă, çурăм хыçне вĕтĕ-вĕтĕ пушăтран çыхса тунă тирпейлĕ пĕчĕк пештĕр çакса янă.

— Тĕлĕнмелле те, кун пек «музей» старикки автора мĕншĕн кирлĕ пулнă-ха!—тесе ыйтĕ вулакан.

Тÿрех тĕлĕнсе ÿкер мар-ха. Малтан тĕплĕн шухăшласа пăхăр. Пирĕн колхозсенчи пек лайăх ĕçлекен, хаçат-журналсемпе кĕнекесем вулама юрататакан, кино-спектакль таврашĕсене çÿрекен, лекци-докладсем итлессишĕн, районта, республикăра, пĕтĕм çĕршывра, ют çĕршывсенче куллен мĕн-мĕн пулса иртнине пĕлессишĕн хыпса-çунакан, сывăхри хуласенче час-часах пулакан старике илсен, вара ăçтан новелла пулма пултартăр-ха! Паллах ĕнтĕ, Лаврас мучи хальхи колхозлă ялсенчи нумай стариксен шутĕнче тăмасть, вăл йăлтах урăхла çын. Ĕлĕкавал Лаврас мучи тĕйче тăрăх нумай çÿренĕ, Шупашкарта, Ехрем хуçа патĕнче пурăннă, Мускавра çар службинче пулнă, хут пĕлнĕ, анчах пирĕн вăхăтра темшĕн вара (çук, темшĕн мар, автора кирлĕ пулнипе!) кая юлнă, тăнсăра тухнă, хут пĕлмен старик пулса тăнă. Ывăлĕн адресне çухатнă, анчах мĕншĕн çухатмалла пулнă-ха тата çав адреса? Мĕскĕн! Çак адреса çухатман пулсан, тен, Лаврас мучине çавăн чухлĕ терт курма та лекместчĕ.

Инкеке пулах вăл поезд çинче те пулин Шупашкар çыннисене мар, салтакран килекен çамрăк çынна университетри студентăна тĕл пулчĕ. Лаврас вĕсене курсан именет: çыннисем лайăх тумланнă-çке, сăн-сăпатран та чипер-çке, тен вырăссем вĕсем, тесе шухăшлать вăл (чăвашсем те лайăх тумланма пултараççĕ пулĕ-çке). Тен, Лаврас мучи асап курасси чăнах та çак «ăнăçсăр» тĕлпулурăн пуçланчĕ. Çакна автор тÿрех ваттисен сăмаххипе çирĕплетсе парать: «Ир такăнсан—каçчен пырать».

Малалла паллашусем пуçланаççĕ. Вокзалта çамрăксен ушкăнĕсем: пĕрисем Сталинграда, теприсем Куйбышева, виççĕмĕшсем Донбаса, Атăлпа Дон хушшинчи канала тунă çĕре, Сахалина каяççĕ. Çак çамрăксене автор Лаврас мучине кăтартма вокзал умне ятарласах кăларса тăратнă, тейĕн. Шел, вĕсем хушшинче Туркменири канала тунă çĕре каякан никам та çук.

Чăннипех те тĕлĕнмелле: Лаврас автобус çине ларать, ывăлне тупас шанчăка çухатмасăр, ун çинчен кондуктортан ыйтать. Лешĕ тĕпчесе-ыйтса тăмасть, ăна тÿрех Атăл леш енчи, заводра ĕçлекен Иванов стахановец патне ярать.

Акă, Лаврас, ĕлĕк-авалхи вăхăтсем çинчен шухăшласа, кăçăрлатнă площадьре утса пырать. Ку тĕлте сасартăк (Артемьев алăпа сĕлтсе илнипе!) ун патне такси пырса ларать те, вара мучи, шухăшла-шухăшла, Атăл леш енне вĕçтерет.

Акă завод. Иванов стахановеца чĕнсе тухрĕç. Çук, ывăлĕ мар. Аптăранă мучи хăйне кĕтекен такси патне пырать. Тĕлĕнмелле: ывăлĕ çинчен мĕншĕн шофертан ыйтса пĕлмен-ха вăл? Чапа тухнă хушамата, тен, вăл та илтнĕ? Ара, чăнах-çке, шофер шăпах пĕр Иванов хушаматлă стахановеца паллать. Акă ĕнтĕ вĕсем, халĕ ывăлне тупассине шанса, хуланалла ыткăнаççĕ. Лаврас мучи машинăра ларса пынă çĕртех палăртрĕ: хула сахалтан та вунă хут ÿснĕ! (Вулакана паллă ĕнтĕ, Лаврас хулара 38 çул пулман).

Анчах мучи тем сăлтава пула кĕтмен çĕртенех таксирен тухрĕ, электроаппаратура заводне те çитеймерĕ вăл (каллех автор ирĕкне пула!). Вăл хăйĕн пур-çук укçине шутласа пăхрĕ те çăмата ăшне пиртăлла хушшине чикрĕ. Карл Маркс урамĕпе çÿлелле çуран утрĕ вăл: хулапа паллашмалла-çке!

Анчах Лаврасăн ăнăçу çук. Ку заводра та ăна ывăлĕ вырăнне урăх çынна кăтартрĕç. Пулса тухмалла вĕт-ха çавăн пек: ăна Иванова—пединститут профессорне, Иванова—генерала кăтартаççĕ, анчах ывăлне нихăçан те тупаймасть вăл. Темле ун пек пулать-çке: вăл урамра те, автобус çинче те ытти çĕртен килнĕ çынсене çеç тĕл пулать: хăшĕ Пушкăрт республикинчен, хăшĕ—Ивановăран, Çĕмĕрлерен!... Епле тĕлĕнес мар-ха кунта: Шупашкарта хăйĕн çыннисем çук!

Пир-авăр комбинатне çул кăтартса янипе Лаврас мучине милиционер та «улталарĕ» курăнать; мĕншĕн тесен унта та вăл хăйĕн ывăлне тупаймарĕ.

Ывăлĕпе ăнсăртран тĕл пулман пулсан, Лаврас мучи татах мĕнле асап курĕччĕ-ши? Вăл ахаль те тинкерен тухрĕ, ытла хытă шăннипе ăна тăхăрвун тăхăр пĕрмеллĕ кĕрĕк те, йĕс хупăллă кивĕ чĕлĕм те ăшăтаймасть! Юрать-ха ывăлĕ те. Ăна куçĕнех шырса сунă те, халĕ ĕнтĕ пĕр-пĕрне тĕл пулсан, савăннипе пурин çинчен те манса каяççĕ вĕсем, ăшă пÿрте—Петĕр хваттерне—васкаççĕ. Кунта вулакансем: «Петĕр ашшĕне мĕншĕн станцире кĕтсе илмен вара?»—тесе ыйтма пултараççĕ. Ку тĕрĕс ыйту. Анчах Лаврас мучипе ывăлне станцире тĕлпултарсан, новелла пулас çукчĕ вĕт.

Çапла ĕнтĕ, Лаврас мучин «асапĕсем» пĕтрĕç. Вăл ывăлĕн çĕнĕ хваттерне çитрĕ, шăнса пăрланнă сухалне çăнăпа шăлса тасатрĕ, праçник валли хатĕрленĕ сĕтел хушшине кĕрсе ларчĕ.

Кунта эпир Лаврас мучи хăй вăтăр сакăр çул каярах пурăннă хура пÿрте шыранине, елкăна темшĕн чăрăшран мар, хыртен туса лартнине, тинкерен янă хут татки—адрес çырнă хут—пештĕре хунă кукăль тĕпне сыпăçнине тата ытти хăшпĕр вырăнсене юриех асăнмасăр хăвартăмăр.

Пирĕн умма тепĕр ыйту тухса тăрать: «Чаплă хушамат» чăн пурнăçа çутатса паракан новелла-и е вăл пирĕн пурнăç çинчен элек сарни пулать?

Пирĕн шухăшпа çапла туйăнать: Артемьев новелли пирĕн чăн пурнăçа пăсса кăтартать, ку пирĕн куллен-кун улшăнса, культурăланса пыракан колхозлă ялтан, уйрăмах колхозлă ялăн çыннисенчен мăшкăлласа кулни пулать. Культура çуртĕсемлĕ, шкулсемпе библиотекăсемлĕ, хулари пекех радио та, кино та, кашни килтех хаçат-журналсем те пур ялсенче халĕ Лаврас мучи пек старикесем юлнă пулсан та, вĕсем питĕ сахал. Çавăнпа социализмлă хулари пысăк улшăнусене, унăн чечекленсен сăн-сăпатне новеллăра çутатса пама Лаврас мучине «инкек-синкек» кăтартни, «асап» тÿстерни писателĕн пысăк йăнăшĕ вăл. Çитменнине тата Лаврас мучи чылай пĕлекен, колхозра аван ĕçлекен старик, ăна, «мĕскĕне», Артемьев çеç новелла çырма кирлĕ пулнипе сăнсăрлатса янă.

«Ялав» журналăн редакцийĕ, çамрăк писатель мĕн çырнине пĕтĕмпех пĕр тишкермесĕр пичетлесе, йăнăш тăвать.

И. НИКИФОРОВ.

Халăх демократи çĕршывĕсенче

Болгарире укçа реформи иртернĕ, апат-çимĕç таварĕсене карточкăсăр сутмалла тунă тата таварсене вакăн сутмалли хаксене йĕтнĕ

СОФИЯ, майăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Болгари Халăх Республикин Министрĕсен Совечĕне Болгарири коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ укçа реформи иртнĕ, апат-çимĕç таварĕсене карточкăсăр сутмалла тăвасси тата таварсене вакăн сутмалли хаксене йĕнтесси çинчен йышăннă постановлени пичетленесси çинчен йышăннă постановлени пичетленнĕ тухнă.

Постановлениере сапла калана: «Юлашки сулсенче халăх хуçалăхĕ ăнăçлă атăлланса пыни, Болгарире промышленность производствин тимĕр хăвăрт çини, ĕç туçăхалăхĕ ӳссе пыни, ялхуçалăхне атăлтарраса тата çĕнĕлле йĕркелесе пырас ĕçри ăнăçусем, тырă тата ытти ялхуçалăх продукчĕсем сутăн илес хăтĕрлемелли плана тултарни—çак çитĕнӳсем партине правительствăна карточка системине пăрахăçа кăларма, таварсене халичен тĕрĕлпен хакпа сутнине пĕтерме, пур таварсене та пĕр пек хакла сутса анлăн суту-илӳ тума тытăнма май пачĕ.

Укçа реформи иртернĕ хыççăн левпа (уксана) товар ытларăх илмелле тума, тĕнчери ăн çирĕн валютăна—совет тенкине танлаштарса, лев хакне çирĕлтетме май парать. Совет тенкине танлаштарса лев хакне туни пирĕн çĕршывăн валюти долларпан уйрăлнине пĕлтерет, доллара, мĕнпур капитализмăл çĕршывсенчи валютăна тинех пекех, кризис пăсса тивет, сăвăн пирки вăл пĕрмаях йĕнелсе пырать».

Партипе правительство йышăннă тăрăх Болгарире 1952 çулхи майăн 12-мĕшĕнчен пуçласа çĕнĕ укçа (1951 çулта калăнă укçа) çӳреме пуçланă.

Совет тенкипе танлаштарсан, лев хакĕ çакăн пек: 1 тенкĕпĕн 1 лев тата 70 сотинок шутлаççĕ. Çавна май 1 лев 0,130687 грамм таса алтăн шутламалла тунă.

Болгарире кивĕ укçана çĕнĕ укçана тăвăтă кун хушшинче—1952 çулхи майăн 12-мĕшĕнчен пуçласа майăн 15-мĕшĕччен уйăлтарнă. Кивĕ укçа камăн мĕн чухлĕ пуянă, çавăн чухлĕ уйăтарнă, 100 кивĕ лев вырăнне 1 çĕнĕ лев шутласа панă. Ес укçи, пенси, стипендин укçи, çавăн пекех çак постановлени тăрăх ес укçине ӳстернине шутласа панă чухне те кивĕ 100 лев вырăнне 4 çĕнĕ лев шутлаççĕ.

Укçа реформине иртернине пĕр вăхăтрах перекет кассине хунă укçана, уйрăм çынсен сутуçи-илӳ тата промышленность предприятийĕсем кредит уçреленнийĕсене хунă укçана çĕнĕ укçа çине кăсăрса шутласçĕ. Государство халичен калăнăй заемсене уйăштарассĕ.

1952 çулхи майăн 12-мĕшĕнчен пуçласа Болгарире çăкăр, çăнăх, вермишель, макарон, рис, ӳсентăран çăвĕне выльăхчĕрлĕх çăнĕ, ăш-какай, пулă т. ыт. те карточкăсăр сутма пуçланă.

Апат-çимĕç таварĕсене пĕр хакпа сутмалла тунă, пара коммерчески хак 6 процентран пуçласа 50 процент таран йĕнелнĕ. Вăл тутра çăкăр хакĕ 35 процент, рис—50 процент, ӳсентăран çăвĕ—38 процент т. ыт. те. Промышленность таварĕсен хакĕсем 5 процентран пуçласа 20 процент таран йĕнелнĕ, вăл шутра çĕр майăк пир-авăр хакĕ 20 процент, çăм пир-авăр—10 процент, атă-пушмак хакĕ—10 процент т. ыт. те.

СОФИЯ, майăн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Болгарири пур хăсатсем те Болгари Халăх Республикин Министрĕсен Советĕпе Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ укçа реформи иртнĕ, апат-çимĕç таварĕсене карточкăсăр сутасси тата таварсене вакăн сутмалли хаксене йĕнетесси çинчен постановлени йышăннă ятпа статьясем пичетлесе кăларнă.

Çак ĕçе тунă май, тĕсе çырать «Работническое дело» хăсат, халăх пĕтĕмĕ 920 миллион лев чухлĕ (çĕнĕ укçана шутласан) усă курать.

Совет Союзĕпе халăх демократи çĕршывĕсенче укçа реформи иртнĕрен тата таварсене йĕнетни социализмăл общество стройĕ капитализмăл стройран нумай малта тăнине кăтартса парать.

СОФИЯ, майăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Болгари Халăх Республикин Министрĕсен Совечĕне Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ укçа реформи иртнересси, апат-çимĕç таварĕсене карточкăсăр сутмалла тăвасси тата таварсене вакăн сутмалли хаксене йĕнетесси çинчен постановлени йышăннă май хăсатсем çаплах статьясем пичетлесе кăларассĕ.

«Работническо дело» хăсат «Карточкăсăр суту-илӳ» ятлă уматтăрра çапла çырать:

Карточкăсене пĕтерни пирĕн тăван çĕршывăн экономика хăвачĕ ӳсинпе пĕлтерет. Пирĕн çĕршывра 1951 çулта, 1939 çултине танлаштарсан, çĕр мамăк пир-авăрĕ виçĕ хута яхăн, çăм пир-авăрĕ—икĕ хут, сахăр—виçĕ хут, суплăнь—икĕ хут ытларах туса кăларнă т. ыт. те. 1951 çулта пĕтĕм тавар çаврăнăшĕнче социализмăл сектор 98,4 процент йышăннă. Иртнĕ çулта кăна промышленность тăварĕсем çутакан 1.072 çĕнĕ магазин уçнă.

Кооперацин суту-илĕвĕ те чылай пысăк ситĕнӳсем тунă. Ялти кооперативсене 1950 çулта 1949 çулхинчен 64 процент ытларах, 1951 çулта 1950 çултинчен 18 процент ытларах тавар илсе пынă. Юлашки икĕ çул хушшинче ялти магазинсен хисепĕ 2,5 хут ӳснĕ.

Пирĕн партипе правительствăн, тесе çырать юлашкинчен хăсат, мирлĕ политика тыткăнăнче çирĕплетнĕ çĕршывăн халăхĕ çĕнĕ укçа çине кăсăрса шутласа пăхать.

Велосипедистсен миршĕн тăнине палăртса иртернĕ ăмăртăвĕ вĕçленнĕ

ПРАГА, майăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Енер кăçхине Прагăри «Спарта» стадионĕнче велосипедистсен Варшавăран Берлина, унтан Прагăна çити—икĕ пин километр ытла—çӳремелли ăмăртăвĕн финишĕ пулнă. Тĕнчери велосипедистсен çак чи пысăк ăмăртăвне 17 çĕршыв спортсменĕсем хутшăннă. Велосипедистсен çулĕ виçĕ государство—Польша, Демократиллĕ Германи Республики, Чехословакин—территорийĕсем урăл выртă, Ăмăрту халăхсем хушшинчи мирпе туслăха çирĕплетес ятпа пулса иртнĕ.

Велосипедистсен ăмăртăвне хутшăнакисене çул çинче Чехословакире пур çĕрте те хуласемпе ялсенчи ĕççыннисем цитĕ кăмăллă тĕл пулса йышăннă. Спортсменсене уйрăмах Прагăра çав тери хавасла та чаплă кĕтсе илнĕ. Чехословакин столицинче пурăнакан çĕршер пин çын велосипедистсем иртес пыракан урама икĕ енĕпе питĕ йышăнăн пухăнса тăнă. Çав урам тăрăх велосипедистсем пĕр-пĕрин хыççăн хăвăрт пынă, «Спарта» стадионĕ патнелле кайнă. «Спарта» стадионне хăнăх питĕ нумай пырса тулнă. Стадиона Иосиф Виссарионович Сталин, Чехословаки президенчĕ Клемент Готвальд, Польша президенчĕ Болеслав Берут тата Демократиллĕ Германи Республики президенчĕ Вильгельм Пик портречĕсене, Совет Союзăн, Чехословакин тата ытти çĕршывсен, Ăмăртăва хутшăнăнă велосипедистсен çĕршывĕсен государство ялавĕсемпе илемлетнĕ.

Стадионра премьер-министр Антонин Запотоцкий сăмах калама тухнă чухне, ăна тăвăллă ала сунса кĕтсе нанĕ. Вăл кĕске сăмах туса калană, велосипедистсен миршĕн тăнине палăртакан Ăмăртăвне хутшăнăна спортсменсене республика президенчĕ, Чехословакин правительстви тата çав ăмăртăва организацилекенсенчен пĕри пулнă «Руде право» хăсат—Чехословакири коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн органĕ ячĕпе саламланă.

Запотоцкий хăйĕн сăмахне «Сывă пултăр пĕтĕм тĕнчери мир, унăн хăваталă тĕрекĕ пулса тăракан Совет Союзĕ тата мирлĕ пурнăçа организацилекенĕпе хавхалантараканĕ гениалĕ Сталин!» тесе вĕçленĕ.

Стадиона пухăнăв 30 пин çын хăйсен вырăнĕсенчен пĕр хăрăс ура çине тăнă, Иосиф Виссарионович Сталина чыласа тăвăллăн ала суннă.

Чи малтан стадиона Чехословаки велосипедисчĕ Скоржека, ун хыççăн Демократиллĕ Германи Республикин спортсменĕ Шур пырса çитнĕ. Вĕсем хыççăн темпсе минутран ытти спортсменсем пĕрин хыççăн тепри пырса çитнĕ.

Велосипедистсен ăмăртăвĕн техникăлăй итогĕсем çапăн пек: Англи велосипедисчĕсĕн команди—пĕрремĕш вырăн, Чехословаки команди—иккĕмĕш вырăн, Демократиллĕ Германи Республикин команди—виççĕмĕш. Бельги команди—тăваттăмĕш, Польша команди—пиллĕкмĕш, Болгари команди — улттăмĕш, Голланди команди — вунпĕрремĕш, Венгри команди—вуникĕмĕш, Дани команди—тăххăрмĕш, Австри команди — вунаммĕш, Италь команди — вунпиллĕкмĕш, Финлянди команди — вунвиçĕмĕш, Триест команди—вунтăваттăмĕш вырăн йышăннă. Ăмăртăва 65 велосипедист ăнăçлă вĕçленĕ. Уйрăм велосипедистсенчен юлашки тапхăр хыççăн пĕрремĕш вырăна Стил (Англи), иккĕмĕш вырăна — Веселый (Чехословаки), виççĕмĕш вырăна—Стаблевский (Франци) тухнă.

Китай халăх правительстви хресченсемшĕн тăрăшать

ШАНХАЙ, майăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). «Шэфанжибао» хăсат çакăн çинчен пĕлтерет: Кăнтăр Цзянсу провинцийĕнче хресченсем валли усă кăлăхи шыв ресурсĕсене заняткисем вĕçленĕ. Тулли мар сведенксем тăрăх, 1951 çулта провинцири кăлăхи шыв ресурсĕне 1.887 пин хресчен, 1950 çулхинчен икĕ хут ытларах, вĕренĕ. Халăхи вăхăтра 921 пин хресчен ытла суйлавăкĕпех вĕрентекен халăх шкулĕсене вĕренме кусĕнĕ, сапла вара халăх шкулĕсене вĕренме кусĕнсен пĕлтĕрхинчен 100 процент ытларах пулнă. Провинцири пурнăç усăллăрне хресченсем кăсăкне вĕренмелли шкулĕсем кашни ялтах пур.

ШАНХАЙ, майăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). «Синьвэньжибао» хăсат паян сапла çырать: Шанхай сывăхĕнчи 10 районта пĕрĕк тухиччен ача ялти пĕрре те пуламан. Кăçал çак районсенче çурхи уйăхăн ĕçĕсем вăхăтĕнче ачасем валли 109 ялти уçнă.

Юлашки икĕ çул хушшинче халăх власăсем Шанхай сывăхĕнчи хресченсене ача ялĕсене тытса усрама 300 инлăнăн çынна укçа панă.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНАЯ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, майăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корей Халăх Республикин Халăх çарĕн главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтерни: пур фронтсенче те Халăх çарĕн соединенийĕсем Китай халăх доброволецĕсем чăçĕсемпе пĕрле Америкăпа Англи интервенчĕсем тата Ли СынМан çарĕсем атакисене сирсе ярас тĕлĕшпе çапăçаççĕ.

Хăвалăç фронтĕнче тăшман темиçе хуттех те Халăх çарĕн позицийĕсем çине атăка тунă, тăшмана каялла хăваласа яна, ăна сиен кӳнĕ.

Вăтăçĕрти фронтра тăшман Пенваюэн районĕнче Халăх çарĕн позицийĕсем çине атăкăсем тунă. Тăшмана хирĕç тапăнса каялла чакарнă, тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсем пĕр взвод чухлĕ мăна çанăçу вырăнĕнче юлнă.

Паян зенитчăй чăссем тата тăшман самолечĕсене пĕтерес тĕлĕшпе кĕрешекĕн стрелок-охотниксем тăшманăн 4 самолетне персе ӳкернĕ. Çав самолетсем малтан Демократиллĕ Корея Республикăн тăрри районĕсенче бомбăсем пăрахнă тата пулеметсемпе пенĕ пулнă.

ПХЕНЬЯН, майăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн главнăй командованийĕ майăн 14-мĕшĕнчен çапла пĕлтерни: ĕнер Корея Халăх çарĕн соединенийĕсем Китай халăх доброволецĕсем чăçĕсемпе пĕрле пур фронтсенче те тăшмана атакисене ăнăçлă сире-сире яни, унăн салтакĕсемпе офицерĕсене тата техникине нумай пĕтернĕ.

Вăтăçĕрти фронтра, Хъолвонь патĕнче тăшман темиçе хуттех те танăпса атакăсем тунă. Ана лайăх организацилесе отпор панă. Çавна пула тăшман каялла чакнă, унăн салтакĕсем пĕр взвода яхăн пĕтнĕ.

Фронтăн тепĕр участокĕнче. Сансинри патĕнче, тăшман хытă танăпса атакăсем тума пăхнă, анчах ăна каялла хăваласа яна, çавăн чухне ăна сиен кӳнĕ.

Паян Халăх çарĕн зенитчăй чăсĕсем тата самолетсене хирĕç çапăçакан салтакĕсем тăшманăн 6 самолетне персе ӳкернĕ тата 2 самолетне снеплесе; çав самолетсем уничен, ытти самолетсемпе пĕрле, мирлĕ халăх пурăнакан хуласемпе ялсене тапăнма пуланă.

Америка самолечĕсем Корейăра тытăнри çар сыннисен лагерьне тапăннă

ПХЕНЬЯН, майăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Пхеньянри радио çапла пĕлтерет: майăн 11-мĕшĕнче Америка самолечĕсем тытăнри çар сыннисен Кандонри 8-мĕш лагерĕ çине каллех пулемечсене пенĕ. Тытăнри çар сыннисем тăваттăшĕ ĕнăçлă аманнă.

Çакна май тытăнри çар сыннисем лагерьте майăн 12-мĕшĕнче пуху иртернĕ, унта Америка империаличчĕсем тискер ĕçĕсене хирĕç протестлесе çыру йышăннă.

И Н Д И Р Е

ДЕЛИ, майăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Инди парламенчĕн (пĕрремĕш созыв) сессийĕ уçăлнă, Инди президенчĕ Радхезида Прасад тата парламентăн икĕ палатинчи (халăх палатинчи тата штатсен советĕнчи) депутатсем приема панă. Прасад президент постне официальнăй йышăннă хыççăн премьер-министр Неру ăна правительствăн инкĕ составĕ отставкăна тухни çинчен заявлени панă.

Сесси уçăличен чылай малтан парламент çурчĕ ларакан районта Инди столицинчи ĕççыннисен демонстрацийĕсем пулнă. Демонстрацисене сулахайри партисем организациленĕ. Демонстрацино пуличесем çине темиçе граната пăрахнă. Полицейскисем демонстрантсем çине пулеметсемпе неме тытăннă, амаланисем нумай пулнă.

Сĕрĕç министрĕ Абдель Азиз Меншари çуртĕнче те çăвăн пекех гранатăсем çурăлнă.

Тунис хулин арабсем пурăнакан пайĕнче ĕнер пĕтĕмĕшле забастовка тунă. Пур магазинсемпе кафесем те кунĕнче хупă пулнă. Сфакс хулинчи сутăçсем те забастовкăна активлă хутшăннă.

«Либерасьон» хăсат çапла пĕлтерет: Франци Тунисри хĕспăлăлă вăйăсен командующийĕ Гарба-генерал Тунис хулинче тата ун сумĕнчи Гулетт поселокра пурăнакан çынсене кăçхине 8 сехет те 30 минутран пуçласа ирхине 6 сехетчен урама тухма чарасси çинчен приказ кăларнă.

ПАРИЖ, майăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). «Се суар» хăсат Тунисри лару-тăру халĕ те лăпкă марри çинчен пĕлтерет. Цензура питĕ çирĕп пулни те, хăсатсем кашни кунах чугун сăлсем çинче вырăсем пулни çинчен, кĕперсене арканни çинчен, телеграфпа телефон сыхăнăвĕсене татни çинчен пĕлтерĕççĕ. Ĕнер Тунис хули центрĕнчи çуртра—почтăпа телеграф çуртĕнче взрыв пулнă.

Франци колонийри власăсем Тунисра тата сыпăхри поселоксенче пурăнакансене кăçхине 8 сехет те 30 минутран пуçласа ирхине 5 сехет çитичен урама тухма чарнă.

Çав районта çĕрлехи вăхăтра пур йышши транспорта та çӳретме чарнă.

АВСТРИРЕ ХАЛАХА ПУРАННА ÇУРТ-ЙĔР СИТМЕСТ

ВЕНА, майăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). «Дер Абенд Зекс-ур-блат» хăсат «Австри хуçисен союзĕ» (Австрире хуласенче пысăк ялсен представителĕсенне пĕрлештерсе тăракан организаци.—Ред.) Австрире пурăннăскан çурт-йĕрсем пирки ĕç мĕнле тăнине тĕрĕслесе пĕлани çинчен çырнă сведенксене пичетлесе кăларнă. «Австри хуçисен союзĕ» тĕрĕслесе тухнă 143 общинăра халăха пурăнма 168.623 çурт çитмест, 80 пин çынран пĕрер кăçалха çĕр вырăнăлли çуртсемпе вăхăтăлха тунă хӳтăхсенче выртса тăна тивет.

Австри президенчĕ Кернер кăçалхи март уйăхĕнче пĕлтернĕ тăрăх, Венăра халăха пурăнма 150 пин çурт çитмест.

Хăсат пурăннăлăн çурт-йĕр ситменне çулталăн-çул ытларах та ытларах палăрни çинчен çырать.

Парижри ĕççыннисем Алжирти, Тунисри тата Мароккăри ĕççыннисемпе пĕр шухăшлине палăртса митинг иртернĕ

ПАРИЖ, майăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Парижра, «Мютюалите» залĕнче Парижри ĕççыннисен пысăк митингĕ пулнă. Ку митинга Францири коммунистсен партийĕ йĕркелеме пухнă. Парижри ĕççыннисем митингра Тунисри, Алжирти тата Марокăри халăхсемпе, вăйăсен пулăшăвĕсем никама пăхăнманлăхăшăн патăр кĕрешекен халăхсемпе, пĕр шухăшпа пулнине палăртнă. «Мютюалите» газечĕ ялан та тенĕ пекех çак темăна çырнă. Çав газета çитнĕ пирки нумай çынсем тухнă. Митинга пынăçăн тата тавăрни пысăкскерне илсенчен пурăнакансем, Франци колонийĕнчи ĕççыннисем Францире пурăнакан представительсем пынă.

Президиума сăнсем суйланă: Францири коммунистсен партийĕн политбюро членĕсем—Жак Дюкло, Андре Марти, Раймон Гюйо, коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн членĕ Люсьен Молино, Франции çамрăк республиканецсен союзĕн секретарĕ Ги Дюкло, Франции прогрессивлă писатель, Сталинла премин лауреачĕ Андре Стиль, демократиллĕ организацисен руководителĕсем, Алжиртан, Тунисран, Мароккăран, Мадагаскартан, «Хура Африкăран» тата Франци ытти колонийĕсенчен Парижа вĕренме пынă студентсен представительĕсем.

Митинга уçнă чухне Раймон Гюйо кĕске сăмах туса калană. Вăл Октябрьти Социализмăлă Асăлă революци халăхсене империализмпа капиталăн пусмăрĕнчен пĕрĕке кăларас ĕçре пĕтĕм тĕнче историйĕнче пысăк вырăн йышăнса тăнине палăртнă.

Унтан Тунисри, Алжирти, Марокăри тата Франци ытти колонийĕсенчи халăхсен наци пĕрлĕхĕшĕн пыракан кĕрешĕнĕ çинчен Франции коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн секретарĕ Андре Марти доклад турă. Вăл докладра çав халăхсен пĕрлĕхĕшĕ никама пăхăнманлăхăшăн патăр кĕрешни Францири ĕççыннисем çăмăрлăн, пĕрлĕхпа мирпĕн кĕрешнине тачă сыхăнса тăнине палăртнă. Ытти халăхсене пусмăрлакан халăх хăй те пĕрлĕхĕ халăх пулма пултарайманнăн çинчен Карл Маркс вĕрентĕнине асра тытса, Франци рабочи класĕ колонисенчи вăрçăсенпе тата халăхсене хĕсĕрлесене чарса лартма, çавсене Индо-Китайран, Тунисран тата ытти колонисенчен илес тухма, çав çĕршывсене нацилле никама пăхăнманлăх пама сине тăрса пыйтать. Пиней правительстви Тунисра, Марокăри халăх ăнăçлă патриотине хирĕç террорпа ĕçсем тăвас тата хытă хĕсĕрлес политика тытса пынине докладчик тăрă шыв сине кăларнă.

Андре Марти тухса калакă чухне зала пухăннисем темиçе хуттех те «Тунис—Тунисри халăхăшăн пултăр!», «Вьетнама мир пултăр!» тесе кăшкăрса тăвăллăн ала çупнă.

Андре Марти тухса калакă хыççăн митинга пухăннисем пĕр сасăпа пулса резолюци йышăннă. Резолюцине çапла калана: митинга пухăннисем «рабочи класс, Францири мĕнпур демократесемпе партисенче колонисенчи халăхсене ытларах пулăшма, сăмахран, çар материалĕсем тума хатĕрлессине тата ытларах çынна конкретлă мерăсем йышăнма чĕнеççĕр». Резолюци тĕрмесемпе концентраци лагерьсенче лараканпа патриотсене Тунис, Алжир тата Марокко патриочĕсене халех пĕрĕке кăларма ыйтать.

Парижри ĕççыннисен митингĕ Франци халăхĕн Алжирти, Тунисри тата Марокăри халăхсен наци пĕрлĕхĕшĕн пыракан кĕрешĕнĕпе кăмăллăнине ир-ӳçĕн кăтартса паракан демонстраци пулнă.

Туниси лару-тăру

ПАРИЖ, майăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Тунисра ĕнер «халăхăн хурăхлă кунĕ» пулнă. 71 çул каялах, 1881 çулхи майăн 12-мĕшĕнче, Франци империализмĕ протекторат çинчен калакан пиччĕ те йывăр «договора» Тунис халăхне вăйпа йышăнтарнă.

«Юманите» хăсат пĕтĕмпе тăрăх, ĕнер Тунисри хулăсенче тата халăх пурăнакан ытти вырăнсенче «Тунис Тунис çыннисем валли пулмалла!» текен лозунга нумай çынлă патриотла демонстрацисем пулса иртнĕ, çавăн пекех забастовкăсем тунă. Тунис хулинче халăх демонстрацийĕсем майăн 11-мĕшĕнче кăçхинех пуçланă. Полицейскисем нумайăшăн пухăнса тăнă пулин те, çĕршер патриотсем Франци—Тунисра правительстви партăн премьер-министрĕ—Баккуш çурчĕ умĕнче виçĕ хуттех пулăшнă. Демонстрантсем çакăн пек лозунгсем кăшкăрнă: «Баккуш тĕн пулăрăп!», «Тунис Тунис çыннисем валли пулмалла!». Премьер-министр дворецне тата полицейскисем çине темиçе граната пăрахнă. Полицейскисем демонстрантсем çине пулеметсемпе неме тытăннă, амаланисем нумай пулнă.

Сĕрĕç министрĕ Абдель Азиз Меншари çуртĕнче те çăвăн пекех гранатăсем çурăлнă.

Тунис хулин арабсем пурăнакан пайĕнче ĕнер пĕтĕмĕшле забастовка тунă. Пур магазинсемпе кафесем те кунĕнче хупă пулнă. Сфакс хулинчи сутăçсем те забастовкăна активлă хутшăннă.

«Либерасьон» хăсат çапла пĕлтерет: Франци Тунисра хĕспăлăлă вăйăсен командующийĕ Гарба-генерал Тунис хулинче тата ун сумĕнчи Гулетт поселокра пурăнакан çынсене кăçхине 8 сехет те 30 минутран пуçласа ирхине 6 сехетчен урама тухма чарасси çинчен приказ кăларнă.

ПАРИЖ, майăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). «Се суар» хăсат Тунисри лару-тăру халĕ те лăпкă марри çинчен пĕлтерет. Цензура питĕ çирĕп пулни те, хăсатсем кашни кунах чугун сăлсем çинче вырăсем пулни çинчен, кĕперсене арканни çинчен, телеграфпа телефон сыхăнăвĕсене татни çинчен пĕлтерĕççĕ. Ĕнер Тунис хули центрĕнчи çуртра—почтăпа телеграф çуртĕнче взрыв пулнă.

Франци колонийри власăсем Тунисра тата сыпăхри поселоксенче пурăнакансене кăçхине 8 сехет те 30 минутран пуçласа ирхине 5 сехет çитичен урама тухма чарнă.

Çав районта çĕрлехи вăхăтра пур йышши транспорта та çӳретме чарнă.

Миршĕн кĕрешекен, çамрăксен çыравĕ

БЕРЛИН, майăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). «Нейес дейчланд» хăсат пĕтĕрнĕ тăрăх, ӳссемпа полицин миршĕн кĕрешекен çамрăксене тапăннă, çавăн чухне полици çамрăксен юнне тăкнă, миршĕн кĕрешекен çамрăксенчен чылайăшне тытса çунă. Тытса хунă çамрăксем 200 çын ытла. Хĕвеланăç Германири çамрăксем миршĕн кĕрешесси çинчен сӳтсе явмалли слетне ирхăс ӳсе пуçарнă пĕр çын патне ӳссемри тĕрмеран çыру янă. Çырура çапла калана:

«Ĕнер американецсен тăра тытнă çарне кĕресшĕн мар, çавăнпăн ӳссемра пирĕн çине пăшалсемпе пенĕç. Ĕнер. йĕнĕпур организацисенчи çамрăк çыннсем, çамрăк рабочисем, студентсемпе вĕренекенсем, полици тĕрминне ларатпăр. Пирĕнтен нумайăшне питĕ тискеррĕн хĕнеçе пĕтеçĕç. Пирĕн ĕçтатăнсенчен икĕ çынна пистолетсемпе персе йывăр аманнă çинчен пире пĕлтерчĕç. Ĕнер хамăр халăхăн ĕçĕ çĕнтерессине пĕтĕмпех шанса тăратпăр, малашне Германире мирлĕ пурнăç тăвассишĕн татах та тимлĕрех, хастарлăрах тата çине тăрса кĕрешие сăмах паратпăр».

Пионерсен çурчĕ

ВУСДАВКА (Хакăс авт.). Рабочисен поселокĕнче кăçалхи майăн 1-мĕшĕнче пионерсен районти çурчĕ ĕçлеме пуçларĕ.

Пионерсен çуртĕнче ачасем техникăлла станцине çӳрĕç. Унта пуçтарулăх кружокĕсен занятийĕсене иртнĕ. Пионерсен çуртĕнче ачасем техникăлла станцине çӳрĕç. Унта пуçтарулăх кружокĕсен занятийĕсене иртнĕ. Пионерсен çуртĕнче ачасем техникăлла станцине çӳрĕç. Унта пуçтарулăх кружокĕсен занятийĕсене иртнĕ. Пионерсен çуртĕнче ачасем техникăлла станцине çӳрĕç. Унта пуçтарулăх кружокĕсен занятийĕсене иртнĕ.

Çак куçенсене çамрăк авиамоделистсем, механиксем, фото ĕçне, туристăкисем кружокĕсем ĕçлеме пуçларĕç. Кружок руководителĕсем—техникăна ăста пĕлекен специалистсем.

Пионерсемпе шкул ачисем хăйсен сутне юратса çӳрĕççĕ.

Спорт хыпарĕсем

ÇАМĂЛ АТЛЕТИКА ЯРĂСЕ

Майăн 14-мĕшĕнче Шупашкар хулинчи çамăл атлетсен сурăхпинчи ярăсем пуçлă ярăсем. Ярăса хутшăнма финкультурниксем 1.000, 3.000 тата 5.000 метр, финкультурницăсем—500 тата 1.000 метр ăмăртăва чупрĕç.

Ярăса хутшăнăнисенчен кооперацин техникумĕн студенткин Емельянова, вунпĕрмĕш вăтам шкул ученикĕ Кириллов, Чăваш педагогика институтĕнче студенчĕ Григорьев тата ытти хăшпĕр çамăл атлетсем паха тĕслĕх кăтартрĕç.

Сурăхпинчи çамăл атлетика ярăсем çавăн пекех республикăри ытти хулăсемпе районĕнче те пуçлă ярăсем. Районсенче хулăсенчи тата ирĕклĕ спорт общестăвисен ушă вăйлă çамăл атлетсем финалăн ярăсĕ çитес вырсарникун Сĕнтĕрте пуçлать.

ТРЕНЕРСЕН СЕМИНАРĔ

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ сумĕнчи физкультурăпа спорт ĕçĕсен комитечĕ çак куçенсене çамăл атлетика, баскетбол тата футбол енĕпе тренерсем хатĕрлемелли вунăкунлăх семинар ирттерчĕ.

Канмалли çуртра

Чăваштконоплястрахкассăн Сĕнтĕрвăрринчи канмалли çурчĕ ĕçлеме пуçларĕ.

Кăçалхи сезонта кунта пурĕ 375 çын канмалла. Çуллахи вăхăтра пионерсен лагерĕ пулать. Унта Чăваш, Мари, Тутар республикисенче пивваллисен кооперацийĕн артелĕсенче ĕçлекенсен ачисем канмалла.

Н. ЛЬВОВ.

Атăл çинче

Атăл шывĕ майăн 12-мĕшĕнчен хушăнса пынă. Кăçал шыв пурĕ 721 сантиметр е пĕтĕрхинчен 19 сантиметр ытларах хушăнчĕ. Икĕ кун хушши шыв шайĕ пĕр улшăмасăр тăчĕ. Майăн 14-мĕшĕнче ирхине 8 сехет тĕлне шыв 3 сантиметр, ĕнер 5 сантиметр чакрĕ.

Кăçал Атăл шывĕ пĕтĕрхинчен ытларах хушăнчĕ пулин те, шыв шайĕ пĕтĕрхине 71 сантиметр ситĕмерĕç. Ăш вăл Атăл кĕрккуне тулли шăнăнниччен кайĕç.

Ĕнер ирхине шывра 9,7 градус, сывлăпра 16 градус ăша пулнă.

Пĕлтерни

Паян, майăн 16-мĕшĕнче, кăçхине 8 сехетре, ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн парткабинетĕнче докладчиксемне агитаторсем валли лекци пулать. Тема: «ССР Союзĕн тĕнчери лару-тăрăвĕ».

Лектор—Г. И. Чавка юлташ.

Паян, кăçхине 8 сехетре, 1-мĕш тата 2-мĕш çул ĕçĕсенчи политикăпа руководительĕсен семинарĕ пулать. Семинарта политшкулсенче итогăл занятисем иртнересси çинчен сӳтсе явмалла.

ВКП(б) ХУЛА КОМИТЕЧЕН ПАРТКАБИНЕЧĔ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РСФСР Юстици министерстви

Хусанти юридически шкулĕ

1952—1953-мĕш вĕренӳ çулĕнче вĕренме илесси çинчен пĕлтерет

Шкул халăх судьи, работник е халăхăн прокурор, вĕсен помощникĕ е халăх следователĕ пулса ĕçлеме вĕрентĕçе хатĕрлет.

Шкула вăтам шкултан вĕрентĕçе тухнă, 23 çултан çамрăк мар, экзамен панă çынсене илеççĕ.

Вĕренекенсене пурне те стипенди кашни уйăхра 460 тенкĕ, семьеллисене—510 тенкĕ параççĕ.

Правительство йышăннă тăрăх, шкула вĕренме кĕрекенсене экзамен пуçланăччен 10 кун малтан отпуск памалла; вĕренме кĕнисене шкула вĕренме пуçланăччен 10 кун малтан ĕçрен хăтармалла.

Вĕренме кĕмелли экзимен августăн 1-мĕшĕнчен пуçланса 15-мĕшĕччен пырать. Çак предметсемпе экзамен памалла: 1. Конституци; 2. ССР Союзĕнчи халăхсен историйĕ; 3. Вырăс чĕлхи тата литература (сырса тата сăмахпа каласа).

Мандат комиссийĕ 1952 çулхи августăн 16-мĕшĕнчен ĕлĕт, шкула вĕренме илес ыйтăва ăла татса парать.

Заняткисем 1952 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕнче пуçланаççĕ.

Шкула илме ыйтăва сырнă заявленнисене августăн 1-мĕшĕччен илеççĕ; заявленнисене шкул директорĕ ячĕпе сыпмалла. Заявлението пĕрле çакăн пек документсем кирлĕ: 1. Вăтам шкултан вĕренсе тухнине кăтартакан аттестат (подлинник); 2. Автобиографи (вĕренме кĕрекенĕн хăй аллипе сыпмалла); 3. Характеристика; 4. Хăçан çуралнине кăтартакан свидетельство; 5. Çар службин енĕпе мĕнле шутланни çинчен справка; 6. Сывлăх çинчен справка тата виçĕ фотокарточка; 7. Республикăри ертсе пыракан организаци панă путевка.

Хусанти юридически шкула вĕренме кĕрес текенсем Чăваш АССР Юстици министерствине ыйтса мĕлме пултараççĕ.

Шкул адресĕ: Гор. Казань, ул. Чернышевского, 10. Юридическая школа. Директин.

РЕСПУБЛИКĂРИ ВЫРАС ДРАМАТЕАТРĔНЧЕ

Паян, майăн 16-мĕшĕнче,

„СЕМЬЯ"

Ырăн, майăн 17-мĕшĕнче,

„Дама невидимка"

Спектакльсем кăçхине 8 сехет те 30 минутра пуçланаççĕ.

„РОДИНА" КИНОТЕАТРТА

Паян, майăн 16-мĕшĕнче, Н. В. Гоголь çырнă повесть тăрăх музыкăлла кино-комедя

„Сорочинская ярмарка"

(сĕвĕ кино).

Сеанссем 12, 14, 16, 18.15, 20 тата 22 сехетре пуçланаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Вологодского 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: ответлă редактор—0-67, ответлă редактор заместителĕ—3-90, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурăç пайĕ—4-17, ялхуçалăх пайĕ—3-07, пропаганда пайĕ—3-61, культура пайĕ—3-61, совет строительстви пайĕ—3-61, спорт пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01343

Типография № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.